32-100 №1304

К. КЕЛИ

# ОКТӐПӖР КӖВВИСЕМ



ЧӐВАШИСТАТ 1932

К. КЕЛИ (Куçнетсов)

# ОКТĂПĔР КĔВВИСЕМ

Сăвăсем

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

Ђ А В А Ш И С Т А Т
Шупашкар 1932

сдано в производство 8/II-32 г.
подписано к печати 10/IV-32 г.
редактор *Г. Краснов*
техредактор *М. Сидоров*

Уполн. Чув.-Главлита 1316 Заказ 93 Тираж 15.000 экз.

17-ая тип. УПП ОГИЗ'а Москва, Шлюзовая набережная, 10.

Кашни хăй ĕçĕпе, анђах пĕр ĕç çинђех—
Çĕн пурнăçшăн мĕлйунлă çар ĕçлет.
Çакă аслă ĕç çинђи пин халăх сассинђе
Ман хамăн пурнăç сасси те илтĕнет.

К. КЕЛИ.

1931-мĕш çулта йанварĕн 23- мĕшĕнђе Кели Кĕркурийĕ (К. Куçнетсов) вилсе кайрĕ. Кели — ђăваш пролеттари литтераттурине тăвассишĕн мĕнпур вăй-халне хурса ĕçленĕ йулташ, поет, тата криттĕк.

Келин литтераттурăллă ĕçхĕлĕнђе теорипе криттĕк ĕçĕ малти вырăнта тăраť. Сăввисем иккĕмĕш вырăн йышăнаççĕ. Ун сăввисенђен вăл револђутсиллĕ сотершани ваљђи çĕнĕ формă шырани курăнаť.

Хăйĕн сăввисенђе Кели, криттĕкла статйисенђе те çавах, пролеттари поеђĕ сотсиалисăм строиттĕлствинђе мĕнле вăй пулса тăнине çутатса пама тăрăшаť. Ку тĕлĕшпе вăл тĕрлĕрен темăсене илет: револђутси кĕввисем, хула сăн-сăпађĕ, çĕнелекен йал, сыхлăх сăввисем, литтераттурă ĕçĕ, т. ыт. те.

Кели хăй ĕмĕрне ђăваш литтераттурĕнђи ĕçхалăхшĕн йут йухăмсемпе кĕрешсе иртерђĕ. Ăна вăл сăввисенђе те, криттĕкла статйисенђе, тата литтераттур орканисатсисенђи кулленхи практĕккăллă ĕçĕнђе те кăтартрĕ.

Кели йулташа тивĕçлипе хак хурса аса илетпĕр. Вал çĕре кĕни çулталăк тултарнă тĕле ун пиокрафине, тата сăввисене кĕнеке туса кăларатпăр.

Çак спорнĕке кĕскен те пулин Келин поеçири пултарулăхне хак парас тĕлĕшпе В. Толковиҫ статйине кӳртетпĕр. Статйапа, пĕтĕмĕшпе илсен, ретакси килĕшет, анҫах унта Келин формалисла йăнăшĕсене саççимех тенĕ пек кăтартманнине асăрхаттарать. Келин теорипе криттĕклĕ статйисем малашне уйрăм кĕнеке пулса тухаççĕ. Çавăнта Келин йăнăшĕсем çинҫен те тĕплĕн çырнă статйа пулать.

Спорнĕкри хăш-пĕр сăвăсенҫе тĕлĕ-тĕлĕпе йăвăр çаврăнăçуллă пуплевсем те, ăнланмалла мар вырăнсем те тĕл пулаççĕ. Вĕсем пурте Келин хăйĕн йăнăшĕнҫен, формă хыççăн хăваланинҫен килнĕ. Ретакси вĕсене Келин уйрăмлăхне (хăйĕнлăхне) çухатас мар тесе çаплипех кӳртет.

Çакăнти сăвăсене ретакси алçырусем, тата Кели вилиҫҫен хăй тӳрлетсе хăварнă çапăнса тухнă сăвăсем тăрăх пиҫетлет.

Спорнĕке ваҙҙи маттериал хатĕрленĕ çĕрте Васанккапа В. Толковиҫ нумай пулăшрĕç.

Çак спорнĕк ҫăвашсен илемлĕ литтераттурине сăнакансемшĕн, литкрушоксен ҫленĕсемшĕн, шкулта вĕренекенсемшĕн, литтераттурпа инттересленекенсемшĕн усăллă пуласса ретакси шанать.

РЕТАКСИ

## КЕЛИ ПУРНĂÇĔНҪЕН

Ҫăвашсен илемлĕ литтератттурĕнҫе К. Куçнетсов — ели Кĕркурийĕ ҫылай паллă вырăн йышăнса тăрат.

Ҫи малтан вăл паллă пуплитсис, ҫăвашсен пролетриллĕ литтераттуришĕн çапăçакан криттĕк; тепĕр нҫен — вăл ҫăвашсен аталанма тытăннă пролеттарил поеçине малтанхи утăм йарса пуснă револҫутсиллĕ етсенҫен пĕри.

Кели пултарулăхĕпе, унăн теориллĕ, криттĕклĕ атйисемпе, сăввисемпе ҫылайĕшĕ паллашса пынă пулссăн, унăн пиокрафине пĕлекенсем çукпа пĕрех.

Келин опҫăллă ĕçĕсемпе, çырулăх ĕçĕнҫи утăмĕсемпе, мелĕсемпе, тата тишкерӳçĕсем хушшинҫе мĕнле ырăн йышăннине татăклăнах кàтартмалла. Кели ĕçхахне кирлĕ, паха происветенисем паҫĕ тетпĕр пулсасн, вăл мĕншĕн çавăн пек тума пултарнине хăйĕн нçул йĕрĕсене сăнанă май лайăхах сисме пулаť.

Кели 1901-мĕш çул Ҫăваш респуплĕкĕнҫе Кĕçĕн лҫĕк районĕнҫи Çĕнĕ Тĕмер (Новое Тинчурино) йатлă лта хресҫен — уҫитлĕ çемйинҫе çуралнă. 15 çулҫен лти шкулсенҫе вĕреннĕ. Револҫутси хыççăнах — 1918-м. лта Хапăсри II-мĕш сыпăк шкула вĕренме кĕрет ăрнар районĕ), унтан Ҫурашри çеминарире вĕренет. ав хушăрах вăл Ҫурашри комсомол йаҫейкки орка-

нисатсилес тĕлĕшпе ĕçлет. Йетĕрне уйесĕнђи ђи ма
танхи комсомолĕссенђен пĕри. 7 уйăх хушши йађейк
çекреттарĕ. Комсомолăн вулăсри орканисаттăрĕ те 
лаť. 1920-мĕш çул çуркунне, 1901-мĕш çул çуралнисе
Хĕрлĕ çар ĕретне ђĕннĕ май, вăл Хĕрлĕ çара кай
1923-мĕш çулти май уйăхĕнђен шăп виçĕ çул хушши
Хĕрлĕ çарта тĕрлĕ пайĕсенђе, тĕрлĕ вырăнсенђе кăн
ђелерте, стройра, куљтçут тĕлĕшпе ĕçлет. Хусан
Татђеккан коментант уйрăмĕн сотрутнĕкĕ пулаť. Ку 
шăра вăл комуниссен партти кăнтитађĕ.

Ђăваш автономийĕ орканисатсиленсессĕн ăна Ђ
ваш опђеккара ĕçлеме куçараççĕ. Опператтивлă уйр
ра пулаť. Хĕрлĕ çартан таврăннă хыççăн Патăрй
уйесĕн милитси уйрăмĕнђе, тата çутпайĕнђе кĕнђ
лерте ĕçлет.

1924-мĕш çул Ђăвашрапфакне кĕрет. Вĕреннĕ хушă
литтераттур орканисатсинђе, тата хаçатсен коррес
тенђĕ пулса ĕçлет. Профком куљтпайĕн пуçлăхĕ. Ç
лахи каниккул вăхăтĕнђе Хутарти вулав çурђĕн пуçлă
пулаť. Рапфакран тухсассăн Ленинкратри Патшал
Универçиттетне историпе архив ĕçне, тата ђĕлхе
литтераттур тĕлĕшпе вĕренме кĕрет (Ђĕлхепе мат
риаллă куљттўр факкуљттеђĕ).

Кунта ђухне Хĕвелтухăç халăхсен çуртĕнђе, архи
сенђе ĕçлет. Литтераттур орканисатсинђе Ленинкрат
пролетписсаттĕлсен ассотсиатсин (ЛАПП) ђăваш çе
сине йертсе пыракансенђен пĕри. Çекси çекреттарĕ
пулаť. Хĕрлĕ салтаксем хушшинђе нумай ĕçлет. П
вăхăтра ђăваш çĕршывĕ çинђен вĕренме пулăшак
Ленинкратри пўро çекреттарĕ те пулнă. Каниккул в
хăтĕнђе Шупашкара килсе ЂППА çекраттариатĕн
тата тĕп аррхивра ĕçлет.

Ленинкратри Университтетăн йулашки курсăнҙе ҙуне Кели ўпке, тата пыр туперккуљосĕпе вăйсăрланса итсе йалне таврăнаť. 1931-мĕш çул йанварĕн 23-мĕıĕнҙе пыр ҙаххуткипе вилсе кайаť. Çамрăкла вилҙĕ улин те, ҙăвашсен илемлĕ литтераттурине Кели й-ш ылай пысăк пурлăх парнелерĕ. Литтераттур ĕçне вăл ĕререн йуратса ĕçлесе пыҙĕ.

„Ҙăвашсен пролеттариллĕ литтераттури çинҙен шуăшламасăр пурăнаймастăп"...

„Вĕренсе тухам-ха. Шупашкара пырам. Вара çур урнăçа литтераттурăшăн парнене кўрĕп", тесе çыратĕ вăл сывмар ҙухне те пуљнитсаран:

„... Вăй пулсассăн çыркалама тытăнатăп. Ҙăтаймагăп. Çак çырупа пĕрле статйа йаратăп", тесе пĕлтеретĕ. Ăна литтераттур фронтĕнҙи тăшмансемпе, ĕçхаăхĕшĕн сийенлĕ йухăмсемпе пĕр ҙарăнмасăр кĕрешсе ынăшăн варалама тапăннисем те пур.—Ăна натсионаисла, кулакла шухăш саракан литтераттăрсем Кели ăра ĕçсе сывмарланҙĕ тесе те елекленĕ, тата тĕрлĕ çлесе пынăшăн сăмах туса пĕтернĕ. Паллах—ун пек алани суйа йапала, Кели опҙăллă ĕçне ним вырăнне уманни пулаť. Келин халĕ кăна йĕрлесе тухнă кунçуĕнҙи опҙăллă ĕçсем Кели литтераттурăри хаклăхне стернĕ, тĕреклентернĕ.

Кели литтератур ĕçне 1919-мĕш çулсенҙех хутшăннă. апăсра, Ҙурашра вĕреннĕ ҙухнех алăпа çырса ҙылай аха шурналсем кăларнă. 1925-мĕш çултанпа ҘППА ретĕнҙе тăрса ĕçлерĕ. Рапфакри литкрушокра таҘППА тĕп крушокĕнҙе те активлă ҙлен. Тăтăшах литератттур ыйтăвĕсем тăрăх токлатсем тăватҙĕ (ҘППА /-мĕш сиесĕнҙе поеçи çинҙен пысăк токлат туса пани инҙен ăраснах асăнма тивет. Ку сиесра ăна ҘППА

правлени кантитатне суйларĕç). Литконсуљтатсире никамран нумай ĕçлерĕ. Пĕр вăхăтра йалта ђухне У тăрти вырăс писсаттĕлĕсемпе çыхăну тытнă. — Улатă вырăс писсаттĕлсен ассотсиатси ђленĕ. Ђăвашла вырăсла та сăвăсем, статйасем çырат. Хаçатсене, ш налсене саметкăсем те сахал çырман. Ахаљрен мар в ЂППА анккетти çинђе хăйне „фелйетонис“ тесе кал Йатарласа вĕреннĕ ĕçĕ „Историк-архивист“ тет.

Çапла ентĕ. Кели й-ш хăйĕн кĕске ĕмĕрне опђă ĕçсенђе, вĕренўре, пуринђен ытла пиђет-литтерат фронтĕнђе кĕрешсе иртерђĕ. Пурнăçне вăл ĕçхалă аслă ĕçĕпе çирĕппĕнех çыхăнтарнă. Хăй кирек хă та пролеттари ĕçĕшĕн тăма хатĕррине сăввисенђе статйасенђе те татăклăн каласа парат:

„Çак аслă ĕç çинђи пин халăх сассинђе
Ман хамăн пурăнăç сасси те илтĕнет“, тет вăл.

Н. ВАÇАНККА

## КЕЛИ — РЕВОЉУТСИЛЛӖ ПОЕТ.

„Сыхлӑх ђанӗпе тӑван ҫӗр ђиккинђе
Еп хуралҫӑра тӑратӑп пит ђипер.
Пролеттари ђӗнсен—ман алӑ хӗҫ ҫинђе
Авӑрланнӑ ман пӑшалӑм—тыт та пер“

К. КЕЛИ.

Мӗнле те пулса клас ӗҫне туман поет ҫук. Класлӑ ıђӗствӑра поет йаланах пӗр-пӗр клас поҫитсине йы-ӑнса тӑрат̆. Кун ҫинђен пире литтераттур историйӗ, ıттераттур тавра, литтераттурӑра, тата литтераттурӑ-ӑн пулса пыракан класлӑ кӗрешӳ калат̆. Поет хӑй ıасӗ инттересӗсене сыхлат̆ пулсан, ытти классен инт-ресӗсемпе килӗшме пултараймаст̆. Вӑл хӑйӗн класла хӗлне творђђӗствӑ урлӑ тӑват̆, творђђӗствӑллӑ ӗҫпе ıассен кулленхи кӗрешӗвне хутшӑнат̆, унта хӑйӗн сот-аллӑ питне кӑтартат̆.

Ҫапла вара, *поеҫи те, пӗтӗм литтераттурӑ ӗкех, классен кӗрешӗвӗнђе хӑватлӑ хӗҫ-йӑшал пулса тӑрат̆.* Поеҫин сатађӗ—класла сатађ. ӑл—пӗрпӗр класӑн, йе классен вӑй-халне ҫӗклесси, тепӗр асӑн, йе классен вӑй-халне путарасси. Урӑхларах кала-н, клас мӗнле сатађсене лартат̆, поет та хӑйӗн творђ-ӗствинђе ҫав сатађсенех лартат̆. Урӑхла пулма та пул-

тараймасť. Мĕншĕн тесен, класлă опђĕствăн саккунлă
çавăн пек. Поетсем çак саккунлăха пăхăнаççĕ те. Хăшсе
ăна пĕлсех пăхăнаççĕ, теприсем — пĕлмесĕр.

Çеçпĕл Мишши ку шухăша çапла кăтартаť:

„Кăвар ђĕрем — пин çын ђĕри.
Еп пĕр çын мар — еп хам пин-пин,
Еп пин — ђăваш, еп пин-пин çын!
Ђĕрем йурри — пин çын йурри!“

Ку шухăша Кели те хăйĕн сăввинђе калаť:

„Кашни хăй ĕçĕпе, анђах пĕр ĕç çинђех.
Çĕн пурнăçшăн мĕлйунлă çар ĕçлет.
Çакă аслă ĕç çинђи пин халăх сассинђе
Ман хамăн пурнăç сасси те илтĕнет“.

Епĕр кунта Çеçпĕл Мишшипе Келийе пĕр хăма çин
тăратасшăн мар. Вĕсем хушшинђе класла расналăх п
рах. Ун çинђен кунта çырмăпăр. Халĕ çакна çеç аст
тарса хăварăпăр: пĕри, Çеçпĕл Мишши, творђђĕств
нђе мĕнле клас поçитсинђе тăнине тĕплĕнех тат
калаймасť, вăл „пин-пиң çынна“, „пин çын“ („Еп-пи
ђăваш“) йуррине кураť; тепри, Кели Кĕркурийĕ, хă
мĕнле клас поçитсинђе тăнине пĕлмест темелле ма
вăл „çĕн пурнăçшăн мĕлйунлă çар“ ĕçленине, „çак
аслă ĕç çинђи пин халăх сассине“ ырлаť. Ырлан
кăна мар, Кели вĕсемпе—пулма мĕнпур вăйне хура
шăн.

„Малаллах пуç усмасăр йухарђђĕ
Епĕ хамшăн сехреп—ман пăлхав кимминђен
Хавшакпа ђĕлĕнсе йулас марђђĕ!“.

(„Револђутси карапĕ“)

Тепĕр сăвăра вăл:

„Поет — вăл тупă ђĕринђен
Йунне сăхса вăл авăрланђĕ;
Вăл пенипе те çĕр çинђе
Хĕн-хур каски пайтах арканђĕ“, тет.

Кели — поет, „поет — вăл тупă“. Анђах Кели мĕнле юет, мĕнле „тупă“ пулнăши? Ку ыйтăва татас тесен, нăн творђђĕствине пăртак та пулин пăхса тухас улаť.

Кели творђђĕстви çинђен çырни çук. Криттĕксем н çинђен çырман. Ку ĕнтĕ пирĕн криттĕка пурнăçран айарах йулса пынине кăтартаť.

Келийе Октăпĕр кĕввисене йурлакан сăвăç теме ураť. Унăн сăввисем нумайĕшĕ Октăпĕр револђутси йтăвĕсемпе çыхăнса тăраççĕ. Хăшпĕр сăввисем айсен йађĕсемпех ун çинђен калаççĕ. Сăмахран: Октăпĕр сăвăçĕсене“, „Револђутси карапĕ“, „Йунă вырсарни“, „Октăпĕр Питĕрте“, „Пăлхав йурри“, „Маллăх кимăнĕ“, „Çĕнĕ çул“, тата ыт те.

Кели кивĕ тертлĕ пурнăça курайнасť. Ун йунлă тикерлĕхĕпе пусмăрлăхне вăл „Йунлă вырсарни“ (1905-мĕш ул) йатлă сăввинђе кăтартса параť. Унта Питĕрти раођђисем патша çурђĕ умне хоруквăсемпе, икконăемпе кайса мĕнле улталани çинђен çыраť. „Йунлă Вырарнире“ Раççейри ĕçлекенсем „ђăтма май килмен мăшăл тўсрĕç“. Анђах ку вĕсемшĕн ахалех çухалмарĕ. ролеттариат 1905-мĕш çулхи револђутсирен кĕрĕшў ппăтне илђĕ. „Иккон вырăнне,— тет Кели,—вăл (ĕçхаăх,— Т.) тăратрĕ йалав, куççул вырăнне тăкрĕ пулђă“. Кив тĕнђене шеллес мар“ — тет вăл тепĕр сăввинђе. ĕншĕн тесен „кивĕ пурнăç — тĕрме“.

Çитрĕ 1917-мĕш çул. Октăпĕрĕн 25-мĕшĕ. „Çĕн ç пуçланђĕ çак кунран“. Çак кун — револђутси пуçлан кун. Револђутсийе Кели ырлаť, уншăн хĕпĕртет.

Вăл çыраť:

„Пĕрре пăлхавлă йун хĕрсен
Теме ĕç паттăрĕ тӳнтерĕ...“
„Кунта çĕн пурнăçăн тĕпелĕшĕн
Вăрçмасăр вăхăт та шумасť...“

Кун сăлтавĕ опђĕствă классене уйăлнинђе, тĕн икке пайланнинђе.

„Халђ ик тĕнђе. Ĕççыннисем
Шăпа Октăпĕршĕн тытаççĕ...“

Йе тата:

„Писмен çинђе етемлĕх ĕмĕрĕ,
Тĕнђе пайланђĕ ик каса.
Шăпа тытатпăр васкаса—
Кама тивет çак çĕрĕн ђăмăрĕ“.

Тепĕр сăввинђе поет каллех çак шухăша калаť.

„Тĕнђе ик йенлĕ — астăватпăр:
Пăлхав,
Çилтăвăл.
кĕрешӳ—
Ниçта ан пултăр килĕшӳ“.

Çапла, Кели Октăпĕрти револђутсине т тĕм ђĕререн мухтаť, ăна йышăнаť, унш çапăçаť. Вăл кĕрешӳшĕн, килĕшӳве хир вăл револђутсишĕн — пăлхавшăн.

Анҫах Октǎпĕр револютсине Кели кǎшт урǎхларах, хǎй майлǎ ǎнланаť, йышǎнасса та урǎхларах йышǎннǎ пек тухаť. Октǎпĕр уншǎн ҫималтан „пǎлхав“. Ку паллах, Кели „револҫутси“ сǎмаха ҫǎвашла „пǎлхав“ тесе куҫарнинҫен те килнĕ. „Револҫутси“, „Пǎлхав“ (бунт) ǎнланусем пĕр мар иккенне Келин пĕлмеллех пулнǎ. „Пǎлхав“ ǎнлану ǎшне тепĕр ǎнланува („револҫутси“) кĕртсе лартнине вулакан ǎҫтан пĕлме пултартǎр. Анҫах айǎпĕ куҫарнинҫе кǎна мар. „Пǎлхав“ тенине Келин кашни сǎввинҫех тупма пулаť. Уйрǎмǎнах вǎл „Пǎлхав йурри“ йатлǎ сǎвǎ ҫырнǎ.

„Пǎлхав кĕвви кивелмĕ ҫас,
Пǎлхав йурри пĕрмай йаǎхравлǎ.
. . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
Пǎлхав хайар, пǎлхав ҫĕресĕр:
Ǎна кирлех йун кӳнĕ ҫӳк“...

Ку шухǎш „Октǎпĕр Питĕрте“ йатлǎ сǎвǎра та лайǎхах палǎраť.

Вǎл ҫыраť:

„Пайан ĕҫхалǎхĕ пǎлхавлǎ“.
„Пǎлхавлǎ Питĕр...“ т. ыт. те.

йе тата:

„Путтилǎв савǎҫĕн рапоҫҫи алли
Пǎлхавшǎн ĕҫре тимĕрленнĕ“.

Ҫапла, Кели 1905-мĕш ҫулхи револҫутсийе те пǎлхав вырǎнне хунǎ пек тухаť. Кунта ҫакна калас пулаť: револҫутси, пуринҫен ытла 1917-мĕш ҫул октǎпĕр уйǎхĕнҫе пулнǎ револҫутси, пǎлхав мар, ǎна нихǎш йенҫен те пǎлхав ҫеҫ темелле мар. Ҫийелтен ҫеҫ пǎхакансене

вăл пăлхав пек те туйăнма пултарĕ, анђах ăна апла ăнланни нихăш йенђен те çителĕклĕ пулма пултараймасť, тата йăнăш та. Октăпĕр револђутсине илсен (Кели ђи малтан ун çинђен çыраť), епĕр ак çакна куратпăр: вăл хăй ăшшĕнех, халăх пăлханнипех пулман, унта орканисатсиллĕ йен, руководствă, полђшевикла тактĕккă вăйлă пулнă. Полђшевиксем револђутсири вăйсене лайăх пĕлнĕ, Ленин пролеттариата ђи тĕрĕс çул кăтартса панă: çавăнпа та полђшевиксем ăçта мĕн кирлĕ, ăçта хăш ункăран тытмалла, хăш йенелле туртмалла. т. ыт. вăхăтсене те аван курнă, аван пĕлнĕ. Пролеттариат тата „тӳнтерекен" вăй анђах мар, вăл çав вăхăтрах творђђĕствăллă вăй.

Çапла, Октăпĕр—вăл пăлхав мар (пăлхав—вăл пуçлăхсене хирĕç тăрса ним йĕркесĕр çĕмĕрни), Октăпĕр—вăл хăйĕн сатађĕсене ăнланса илнĕ пролеттариатăн револђутсийĕ. Пролеттариат полђшевиксен партийĕ йертсе пынипе ун патне хатĕрленсе тухнă, вăл ĕçе орканисатсиленĕ. Пролеттариатпа пĕрле ĕçлекенсен масси пулнă. Револђутсин орканисатсиллĕ, тата творђђĕствăллă йенĕсене ĕнтĕ Кели çителĕклĕ таран тавçăрса илеймен. Вăл „кив пурнăçа—тĕрмене" çĕмĕрнине (тӳнтернине) кураť, анђах кивĕ пурнăçа орканисатсиленнĕ вăй—пролеттариат—пĕтернине уççăн кăтартса параймасť. Çакă Кели поеçинђе хирĕçӳллĕ вырăн пулса тăраť. Кели Октăпĕршĕн, анђах ăна вăл пăлхав йенђен пăхаť. Кели—хăй те киввине хирĕç тăракан пăлхавçă. „Октăпĕр сăвăçĕсене" те пăлхавçă пулма хушаť вăл.

„Поет пăлхавлă,
Йурри йыхравлă..."

Йе тата:

„Хĕнхур аваллăхĕ,
П ă л х а в пахаллăхĕ
Асран каймаççĕ...“
„Çитес ыраншăн ес пайан,
Поет, п ă л х а в йурри йурла“.

Кун хыççăн Кели мĕнле поет пулнине те калама пулаť. Кели револ̧утсиллĕ поет. Çав вăхăтрах вăл пролеттариатпа тапитĕ çывăх тăнă, вăл пролеттариат çулĕ патне куллен çывхарса пынă. Уншăн урăх çул пулман та. Ку протсес уншăн çăмăлах пулман, пăлхавçăран, револ̧утсионертан пролеттариллĕ револ̧утсионер пулма çăмăл мар.

Çапах та, вăл пĕрмайах малалла туртăннă, вăл пулас тĕнђешĕн çунма пултарнă.

„М а л а л л а х! Хирĕлсе таврари çулсемпе
Йухăнатпăр ниçта ђарăнмасăр.
Пирĕн хурçă кĕсмен кĕрешет хумсемпе
Тинĕсри вупкăна пăхăнмасăр“.
„Хĕвелшĕн вăрçăпăр — кам çĕнĕ?
Çĕнетпĕр епĕр. М а л а л л а!!“
„Куратпăр, м а л а л л ă х, сан Аслă кунна.
Ех, пар ĕмĕрсем урлă ху аллуна...“
“Пур ĕççынне илттеретпĕр
Хамăр малаллăх ђанне“.

Тситаттăсем урăх кӳмĕпĕр. Кусемпе те çитĕ. Вĕсенђен Кели малалла мĕн пур хăйĕн вĕйĕпе туртăнни аванах курăнса тăраť.

Кели нумай пама пултарнӑ. Келин талант пулнӑ. Вӑл поет ҫеҫ те пулман, Кели тата — пысӑк криттӗк, теореттӗк. Ун поеҫиййӗнҘе тата хӑйне майлӑ философфи те пур. Вӑл философфи „пӑлхав" ыйтӑвӗ тавра тӗрлӗрен майсемпе ҫаврӑнса тӑрать. Унӑн хӑшпӗр сӑввисене ӑнланма та хӗнтерех. Вӗсем йӑвӑррӑн вуланаҫҫӗ. Хӑш вырӑнсенҘе шухӑшсем опрӑссем айне те пулнӑ.

Кунта ҫакна тата калас пулать: Келин ерутитсиййӗ пысӑк, вӑл нумай пӗлнӗ. Вӑл хӑйӗн шухӑшӗсене пуйанлатас тӗлӗшпе хытӑ ӗҫленӗ. Кели сӑвӑ технӗккине те питӗ лайӑх пӗлнӗ. Ку тӗлӗшпе Келипе Ҫеҫпӗл Мишши Ҙӑваш литтераттурӗнҘе Ҙи малти вырӑнта тӑраҫҫӗ теме йурать. АнҘах вӗсем сӑвӑ технӗккипе тӗрлӗрен усӑ курнӑ. Ҫеҫпӗл Мишши ҫӑмӑл сӑвӑсем ҫырма пултарнӑ, унӑн таланҘӗ те пысӑк пулнӑ. Кели йӑвӑр ҫырнӑ, вӑл ҫӗнӗ технӗккӑ шыранӑ, ҫӗнӗ формӑшӑн киввине хирӗҫ кӗрешнӗ. Кели Ҙӑваш поеҫийӗн формиййӗ мӗнле улшӑн са пынине те лайӑх сӑнанӑ. Вӑл ҫӗнӗ сотершани кивӗ формӑпа ҫырлахма пултарайманни ҫинҘен темиҫе ҫӗрте калать. Ун ку тӗлӗшпе ҫырнӑ криттӗкле статйасенҘе йӑнӑш та пулнӑ.

Ҫапла, Кели — поет-философсӑф, Кели Ҙӑваш-сен револ҄утсиллӗ поеҘӗсӗнҘен пӗри. Ку та сахал, вӑл — пролеттариата ҫывӑх тӑракан револ҄утсиллӗ поет. Кели пролеттариатран айакра тӑман. Ҫавӑнпа та ҫак револ҄утсиллӗ поет:

„Ан Ҙар! Октапӗр кӑварне

Поет акать хавассӑн — актӑр!" — теҫе йурлама пултарнӑ.

Ие тата:

„Вутра хунанӑ сӑвӑҫсем
Ҫуратнӑ амӑшне манмаҫҫӗ.
Октӑпӗр ҭапӗшӗн вӗсем
Пайан мухтав йурри йурлаҫҫӗ“.

Шупашкар, 12-XII-31 ҫул.

В. ДОЛКОВ

В. Долгов.

---

## ОКТӐПЕР СӐВӐÇЕСЕНЕ

Вутра хунанӑ сӑвӑçсем
Çуратнӑ амӑшне манмаççӗ:
Октӑпӗр ҙапӗшӗн вӗсем
Пайан мухтав йурри йурлаççӗ:
Пурте пӗр сассӑн
Йурлар хавассӑн!
    Менељнӗк—пур ӗççыннисем;
    Илтетре, йурӑ ӑстисем?
Ӗç ӑннӑ çемӗн сирӗн те
Çултан çулах çӗкленӗ ҙапӑр;
Сире Совет çӗршывӗнҙе
Итлет Вуниккӗмӗш Октӑпӗр.
Поет пӑлхавлӑ,
Йурри йыхравлӑ:
    Тӳлек кунра та ун ҙӗри.
    Хӗвел пек, çиçӗмлӗ, вӗри.
Ан ҙар! Октӑпӗр кӑварне
Поет акаӑ хавассӑн—актӑр:
Вӑл сӑввипе кӳрет парне,
Теприн парни тырпул, йе трактӑр.
Пӗр мар шӑпамӑр,
Куратпӑр хамӑр.

Анҫах пӗр тӗлшӗн тар йухаҫ.
Пулас тӗнҫе парне пухаҫ.
Поет—вӑл тупӑ. Ҫӗринҫен
Йунне сӑхса вӑл авӑрланҫӗ;
Вӑл пенипе те ҫӗр ҫинҫе
Хӗнхур каски пайтах арканҫӗ.
Хӗнхур аваллӑхӗ,
Пӑлхав пахаллӑхӗ
Асран каймаҫҫӗ. Вӗҫернӗ-и
Вуникӗ ҫул ӗҫре хӗрни?
Вуник ҫул тӑршшӗпе тӑванлӑ
Ӗҫне пӑлхавӑн пӗр ама:
Октапӗр!
Сӑвӑҫ та пӗр анлӑн
Вӗсемшӗн тивӗҫ йурлама!
Ӗҫри илемлӗхшӗн,
Пулас етемлӗхшӗн
Ҫитес ыраншӑн ес пайан,
Поет, пӑлхав йурри йурлан!
Миҫе Октапӗр тӗл пулан
Ҫӗн ҫул ҫинҫе?—пӗлместпӗр хамӑр.
Йурла, поет! Сана пайан
Итлет

Вуниккӗмӗш Октапӗр!

---

# РЕВОЉУТСИ КЁВВИСЕМ.

## РЕВОЉУТСИ КАРАПЁ.

Епёр çён карappa таврăнусăр кайса,
Çак шалпар тёнђене йăранлатпăр,
Ёмёрсен киммине çён йёрпе айтаса [1])
Тёл пулан кăлтăка салататпăр.
Çыр инçе. Çул тискер. Килес кун çăварне
Хёрнё вăрçăн ђаршавё каплană;
Пирён шиксёр карапăн ђукун кăшкарне
Таврипех хура хум ыталанă.
Малаллах! Хирёлсе таврари çулсемпе
Йухăнатпăр ниçта ђарăнмасăр.
Пирён хурçă кёсмен кёрешет хумсемпе
Тинёсри вупкăна парăнмасăр.
Уйарса тулнă кун шăратуллă вёри—
Çут хёвел шăртланса çитрё темшён.
Вут пашкаť карапран, çурăласшăн ђёри—
Тăлă çук ёççынни çарёсемшён.
Ав-асар та писер—хумсенђен тăпăлса
Тухрё çил—тинёсе ђўхентерђё;
Авăк [2]) çитрё пире шутлашма тăвăлпа:
Унăн терђё пире киллентерђё.

Синкерсе пыракан çавраçилĕн йупи
Тинĕспе пĕлĕте çăтăхтарђĕ.
Авраса çăтас пек суккăр тĕтĕм купи
Кулакан хĕвеле тутăхтарђĕ.

Ахлатса çурăмран ӳтсĕр сывлăш алли,
Тупă хыççăн, тĕкет шеллемесĕр,
Çавраçил тĕпренет; пур пăртак ун палли—
Пĕтес çук văл тепре тĕллемесĕр.

Сайраланнă пăртак карапри сасăсем—
Çулăнса пĕр ĕрет сассăрланнă;
Тинĕсри авăрта тупăк тупнă вĕсем,
Вупкăн шывĕ йунпа ав сăрланнă.

Пирĕн хурçăллă çар иксĕлмест, ӳсĕнет.
Çĕр ђаксан—пин, çĕр пин хутшăнаççĕ,
Ыранхи кун пире çĕнĕ авăр сĕнет,
Кĕрешсех кун-çулсем йухăнаççĕ.

Тĕл инçе.
Çул тискер.
Çыр патне çитиђђен
Малаллах пуç усмасăр йухарђђĕ.
Епĕ хамшăн сехреп—ман пăлхав кимминђен
Хавшакпа ђĕлĕнсе йулас марђђĕ!

## ЙУНЛĂ ВЫРСАРНИ. [8])

Рапођђишĕн пурпĕр—йункун, вырсарни—
Йухаť кулленех унăн йунĕ;
Малаллăхшăн хаклă ун йунлă парни
Пайан тем пекех тулђĕ йунĕ:
Йанвар... çирĕм иккĕмĕш. Питĕр пайан
Çăтаť сывлăша пит васкавлă;

Хула пĕвенет шăнăçма пур таран;
Мĕнле ĕç пайан пит хускавлă?

Путтилăв савăђĕн рапођђи алли
Пăлхавшăн ĕçре тимĕрленнĕ.
Пайан курăнмасť ун пăлхавлăх палли,
Патша умнелле вăл çĕкленнĕ.

Патша çурђĕн умĕ тулаť ĕççыннипе:
Хоруквă, [4]) иккон сулланаççĕ.
Тискер патшана пуп Каппон сĕннипе
Пин çын куççулпе пуççапаççĕ.

Кам илттĕр ӳпкевлĕ ђура йĕрнине?—
Йухаť палăрми ун куççулĕ...
Пăшал кĕмсĕртетрĕ... ответ ĕççынне;
Пин çыннăн хупланђĕ кунçулĕ.

Ĕççыншăн, ес пăх тĕлĕнмесĕр кайа.
Тĕлкилнĕ çак кун йун тăкмашкăн:
Тертпе, выçăпа ансăрланнă майа
Пăшалăн айне тăратмашкăн.

Ĕçхалăхшăн пурпĕр—йункун, вырсарни—
Куллен тăкăнаť унăн йунĕ.
Куççуљ, йе пăлхав? Пуп Каппонăн [5]) парни
Патшашăн пайан пулђĕ йунĕ.

Мухтав—вилнисемшĕн. Çакна ӳлĕмрен
Асра пур ĕçхалăхĕ усрĕ:
Вăл хăй тивĕçне хӳтĕлес тенĕрен
Ђăтма май килмен мăшкăл тӳсрĕ.

Ĕçхалăхĕн тĕлĕ хаљ йунлă пăлхав,
Ыран пайан мар, вăхăт пулĕ...
Иккон вырăнне вăл тăратрĕ йалав,
Куççуљ вырăнне тăкрĕ пуљă.

## ОКТАПЁР ПИТЕРТЕ.

(Ескис)

Сив кăнтăр çитрĕ ҫикене,
Кĕрхи çанталăк хăмăрланҫĕ,
Ӳпленҫĕ каç хула çине,
Ҫĕр сывлăш уççăн йанкăрланҫĕ.
Асфаљт йĕрет, ҫавккаҭ урам —
Пин çын мĕлки, пин çын йанравĕ.
Вăрçни ан пултăрҫҫĕ харам—
Пайан ĕç халăхĕ пăлхавлă.
Пĕр хут лармасҭçке хĕлĕ те —
Кĕрпе ҫунсем тăвăрланаççĕ.
Тем пĕвеленĕ пĕлĕте,
Ун хĕввине сассем ҫăммаççĕ.
Ҫĕр сывлăш кӳпĕннĕ пăспа,
Йĕпхе çуса кĕре витерҫĕ.
Пăлхавлă Питĕрĕн çампа
Кĕрхи кунра пит пысăк терҫĕ.
Çак тăсăк çимни твореçра
Керĕнски влаçĕ хупăрланнă.
Выç Питĕр майлă вăхăтра
Мула ватасшăн кăварланнă.
Мула упраççĕ йункkĕрсем—
Еççыншĕн паллă ун имшерĕ:
Пĕрре пăлхавлă йун хĕрсен
Теме ĕç паттăрĕ тӳнтерĕ...

Шăнарaймасҭ Нева çилне,
Иепле ҫăтас ун çиленмесĕр?—
Утланнă Крейççĕр ун çине,
Çураҭ хумне—куратри есĕр!

Ђукун кăшкарлă тупăсем
Ун хулпуççи çинђе канаççĕ.
Пĕртенпĕр шăтăк куçĕсем
Темме творес çине пăхаççĕ.
Ыйтаĭ ĕç çарĕ творесран
Влаçа памашкăн хирĕçмесĕр,
Кĕтеççĕ 20 минутран,
Иртерђĕç 30 пĕр ђĕнмесĕр...
Пеме пикенђĕç йункркĕрсем.
Хусканђĕ халăх влаç шăпишĕн
Ан ђар, ĕç çарĕ йун хĕрсен
Тăма пултарĕ хăй тĕнђишĕн.
Ак Петроппавлăвкка йенђен
Çикналлă тупă кĕмсĕртетрĕ.
Йуна пăтратрĕ тĕпĕнђен.
Йăхравлă сас ђуна çĕклетрĕ.
Йанратрĕ крейççĕр тупăпа
Творес ăшне снарет çиçтерђĕ,
Вĕçленђĕ емĕрхи шăпа:
Раççей ĕçхалăхĕ çĕнтерђĕ.
Хĕр паттаљйунĕ, йункĕрсем,
Хусах отређĕ—парăнаççĕ...
Хаљ ик тĕнђе. Ĕççыннисем
Шăпа Октăпĕршĕн тытаççĕ...

## ХЁВЕЛ.

Сенкер çатма—ђикесĕр пĕлĕт;
Сар çу тумлакĕ—сар хĕвел...
Йухаĭ хĕвел. Ун ĕçĕ-хĕлĕ;
Ирпе çутал та, каç—хĕрел.

Ĕмĕрлĕхпе пурнăн хĕвелĕшĕн
Çак вăрăм тавлăк туйăнмасть,
Кунта çĕн пурнăçăн тĕпелĕшĕн
Вăрçмасăр вăхăт та шумасть.
Ку çĕр çинҫе сехет те анлă.
Самантăн пин çын хирĕлет.
Такам ҫăтать, такам ылханлă,
Хĕвелшĕн пурпĕр—хĕрелет.
Писмен çинҫе етемлĕх ĕмĕрĕ,
Тĕнҫе пайланҫĕ ик каса.
Шăпа тытатпăр васкаса—
Кама тивет çак çĕрĕн ҫăмăрĕ.
Хĕвел шăвать ниме пĕлмесĕр,
Ҫурашăн, мулшăн, тиркемесĕр,
Çутта тăкать вăл сулхипе
Сукмаксăр пĕлĕт йуххипе.
Ун ырлăх-шырлăхĕ ҫикесĕр;
Пуриншĕн те, камне пĕлмесĕр,
Кулать вăл ылттăн тутипе.
Ăçтан ыр пулăн тĕнҫипе?
Вăл хĕртнипе йерет ĕçхалăхĕ,
Вăл савнипе кулать хуçа.
Хĕвеллĕ пурнăçăн малаллăхĕ
Халҫ тин ак курăнҫĕ куçа.
Çĕнет ĕçхалăхĕн Сойусĕ
Тĕнҫе шăпи тухать вĕçне;
Хĕвелшĕн кĕрешсе çулпуçĕ
Ĕмĕрлĕхе хурать пуçне...
Асту, тĕнҫе йепле илемлĕн
Комунлă пурнăçшăн йурлать.
Пĕр ĕçĕн çарĕ çеç—етемлĕх,
Пĕр уншăн çеç хĕвел кулать.

Хĕвел кулать. Етемлĕх çĕнĕ.
Хĕвелĕн пур пĕр кулмалла...
Хĕвелшĕн вăрçăпăр—кам çĕнĕ?
Çĕнетпĕр епĕр. Малалла!..

## 6 СЕХЕТ ТЕ 50 МИНУТ [6]).

Вун минут çиҫ сехет çитесси
— Хĕрнĕ пурнăç сасартăк хуҫланҫĕ:
Пĕтрĕ Ленин!
Çук Ленин сасси.
Аслă шухăш вуҫахĕ хупланҫĕ...
Туртрĕ ĕçхалăхне сӳннĕ çăлтăр
Мускава, инçетри йалсенҫен,
Хĕнхурти хĕвелтухăçпа кăнтăр,
Хĕвеланăçпа çурçĕр йенҫен...
Вată Кремĕлĕн ĕмĕр тӳнми
Сайра шăллă хӳми хӳттине
Выртрĕ Ленин!
Унăн йаҫĕ сӳнми
Сарăлать çиçĕм пек тĕнҫене.
Сехетрен сехете Спас сехеҫĕ
Ҫухăнсен кĕввипе ҫан çапать.
„Хĕрлĕ плошҫăть" питне хур пиҫеҫĕ
Çамăр пĕлĕҫĕ пек хупăрлать.
Иĕрнĕ Кремĕл [7]) мукалнă шăлне:
Сивĕ кун ăна пить киллентернĕ,
Таҫка ҫуллă хӳми тăррине
Аскăн çил тăрăнса кӳрентернĕ.
Ҫавкасем унăн пашни çинҫе
Шăн куна йантратса çуйхăнаççĕ.
Айалта... мавсолей умĕнҫе
Ҫеретре пин-пин ҫун... хурланаççĕ.

Шухăш пек, шăппăн çеç шăваť халăх
Аслă тупăк тавра çаврăнса;
Ĕç сынни:
„Сăлтав çук хурланмашкăн“
Тесе калĕ унтан таврăнса:
Ленина вăл хађ курнă хăй куçăн —
Ун питне савăк çеç сухаланă,
Хĕвел пек çутă пуçлă çулпуçĕн
Çамкинђи шухăшне вăл вуланă:
Ђĕнет ĕçхалăхне аннă çăлтăр
Пусмăрпа кĕрешме çĕниђђен—
Пусмăрти Хĕвелтухăçпа кăнтăр,
Хĕвеланăçпа çурçĕр йенђен...
6 сехет тулни 50 минут—
Пайан кун ĕççынни хуйха кайнă:
Тĕнђене шăнăçми паттăр Вут
Тăвăр тупăк ăшнех шăнăçайнă.

## МУХТАВ ЙУРРИ

Сайралђĕ сывлăшăм, туйатăп,
Сисетĕп, уттăм тапăрланђĕ,
Ĕçпе ĕç халĕ сусăрланђĕ,
Çампа ĕçе еп йур йурлатăп,
Мухтав йурри.
Ĕс çарĕпе танах еп шурăм
Ун Йупари пăлхавĕнђе,
Çĕн ăстасен ĕретĕнђе,
Еп те тăрса çĕн пурнăç турăм.
Мухтав ĕçе!
Тертпе хађ епĕ курнăçман —
Телейлĕ пулђĕ пурнăç ман:

Çĕн тĕнҗене курса еп йултăм,
Ун малтанхи ăсти еп пултăм.
Хисеп ĕçе!
Тавра шавлаť, тавра пăлхавлă
Йурлаť тем кимăнĕ йанравлă...
„Малаллăх кимăнĕ"... илтетĕп,
Малаллăх ĕçĕшĕн вилетĕп —
Тĕнҗе ăна!
Тĕнҗе ăна Мухтавлă Ленин
Калаť мана: Ес те вилетĕн
Еçхалăх ĕмĕтшĕн — комуншăн.
Еп те хама вĕт кўтĕм уншăн
Парнене.
Тĕнҗе комунĕн çапĕ җанĕ,
Тусан пулса ман ўт саланĕ,
Анҗах ман ĕçĕн ĕмĕре,
Шел мар ыраншĕн ĕнере
Парнелеме.
Җĕрем вилет, таппи лăпланҗĕ,
Кăварлă ўтĕм йывăçланҗĕ,
Капланҗĕ сивĕ йун вара...
Сунатăп вилĕме кура
Мухтав ĕçе.
Вилнисемпе тухам вĕçе,
Тепри çуралтăр тĕнҗене,
Йурлатăр пурнăç выранне,
Çĕн пурнăç паракан ĕçе
Мухтав йурри.
Ак вилĕм — пурнăçăн тăлли,
Ман сывлăша шырат алли...
Ĕç çарĕнҗен тухса йулатăп,
Йулашки хут ĕçе калатăп:
Тĕнҗе... сана!..

# МАЛАЛЛĂХ КИМĂНĔ

Мы — за Азию. Мы — за Восток.
Мы — за Эйфели. Мы — за Европу
Над которой серп и молоток
Укрепят заводов мощный ропот.

А. ЖАРОВ

Мĕлйун шутлă ĕçлĕ хыткан алăсем!
Ырхан калђа пек тăсăлаççĕ вĕсем —
Иртен пуçăнса, кăнтăрла та каç та,—
Калаха, малаллăх, ăçта?
    Тĕнђе киммипе терт йурри ђĕвĕнет.
    Ауксăр таçта çухалса çĕкленет.
    Ăçта вăл çĕтет, таврăнмасăр таçта,
    Калаха, малаллăх, ăçта?
Пĕлетни тĕнђен, ес, кĕтен ĕмĕтне?
Вăл есĕ, санпа вăл тертсен вăхăтне
Вĕçлесшĕн, касасшăн хĕнхур тĕввине,
Йурласшăн пăлхав кĕввине.
    Хĕнхур урапи, ĕççынне йурами!
    Пĕрмай шултăркаŭ пусмăрпа кустăрми,
    Вăл çĕр ђăмăрне йŭшкĕнтерђĕ йунпа,
    Анђах антăхмарĕ унпа.
Ун тĕксĕм саманĕ анаŭ сăрт айне,
Путаŭ кивелсе хăмăр пĕлĕт хыçне.
Питне пăхăрланă, ђашлаŭ сив çилпе
Çийет тăранусăр пилпе.
    Куçпа ĕмĕрсен кăкăрне витерме
    Вĕрентрĕ пире кивĕ пурнăç-тĕрме.
    Çĕн çул урлă епĕр çитес инçене
    Кĕртетпĕр çĕн пурнăç плане.
Пайан та ыран — терт историн йĕрки,
Вĕçне сŭтĕлсе тухĕ пусмăр тĕрки,

„Пайан“ ыранах тухмалла „ёнере“ —
Шел мар иртнĕ кун ĕмĕре.
Ђура, ĕмĕрпе пӳрнĕ ирĕк кунне
Кĕтет, пехиллет ăна хаклă йунне,
Ун ђаплă алттарĕ тулсан парнепе,
Ăсатĕ аçа тĕнђипе.
Куратпăр, малаллăх, сан Аслă Кунна.
Ех, пар ĕмĕрсем урлă ху аллуна!
Мĕлйун шутлă ĕçлĕ, хыткан алăсем —
Ав — тыт: туртăнаççĕ вĕсем.
Ав: Лонтăн, Пеккин, Вашшинктон тĕлĕнђев
Хĕнхур йуррисем çĕкленеççĕ вĕçрен,
Кĕтеççĕ ђăн ирĕк кӳрес ĕмĕре —
Вĕркет ирĕк йун ђĕрере.
Сан çурт никĕсне хĕрлĕ хурçă хывса,
Пырас çул çине ирĕк йунĕ тăкса,
Тĕнђе çаврипех, епĕр хађ кĕрешетпĕр,
Пăлхав кимăнне кĕвĕлетпĕр!

## КОМСОМОЛ МАРШĔ

Епĕр напат çаптăр, тетпĕр
Кив тĕнђепе сутлашма;
Хамăр çара йĕркелетпĕр
Ленин ĕçне васкатма.
„КИМ“ ĕретне ним ђараймĕ —
Хурçă хӳме, ни Мăнплан [8])
Ним каплама пултараймĕ
Çут хĕвеле тухасран.
Çĕр çаврипех кăварлатпăр
Епĕр пăлхав кăмрăкне;
Тинĕс урлах ал паратпăр
Пур ĕççыннин çамрăкне.

Епĕр тĕнҫе ҫунтăр, тетпĕр
Йунлă пăлхав вуҫĕпе.
Ҫĕр ҫăмăрне хĕрететпĕр
Хамăр комун йунĕпе.
Ҫурҫĕр те, кăнтăр та тухĕҫ —
Мул тĕнҫине сут кĕтет —
Ав вăранаŤ хĕвелтухăҫ,
Ав хĕвеланăҫĕ хĕрет.
Тар сăрхăнаŤ ĕҫ комуншĕн
Ҫырсăр йухаŤ ҫĕр куҫҫуҫ —
Ĕмĕртенпе кўнĕ уншăн
Йунлă парне темĕн ҫул.
Епĕр тĕнҫе туйтăр, тетпĕр
Ҫаплă хускав ташшине,
Пур ĕҫҫынне илттеретпĕр
Хамăр малаллăх ҫанне.
Пурнăҫ — Мускавшăн Кантоншăн —
Мулшăн вĕсем тĕмеске;
Лонтăн, Перлин, Вашшинктоншăн
Ĕмĕр вĕренĕ кĕске.
Епĕр комунлă хулашăн —
Хып Лонтăна вуткăвар! —
Ҫĕн пурнăҫпа ҫĕн йăлашăн
Кив тĕнҫене шеллес мар.
Шахтă, тĕрме, хапрăк-савăт
Каттăркă, фермă йенҫен
Пин аслати харăс авăт,
Ҫур тĕнҫене варринҫен.
Ик тĕнҫи те кама пулĕ —
Ку, комсомол; сан ĕҫў! —
Ҫакă малаллăхăн ҫулĕ,
Ҫак йулашки ҫапăҫу!..

# ТИНЕС

> Стоит советская страна
> Гимн мира супостатам втор
> Как неприступная скала
> В волнах бушующего моря.

Куҫпах ытамлас ҫук вӗҫхӗрсӗр тинӗсе.
Таҫта ун хырӑмӗ ҫӗленнӗ пӗлӗтпе,
Ҫырансене йепле вӑл кӗнӗ ҫийӗнсе,
Мӗн ђул ҫӗре вӑл хупӑрланӑ ҫӗлӗкпе?!
Инҫе, хускавсӑр унӑн хумлӑ тӳпинђе
Хура кӑвапа пек выртаӑ пӗр саплӑк ҫӗр.
Тымарӗ ун тӗпре, ҫав тинӗс тӗпӗнђе
Выртаӑ пуђ ҫийӗнсе, шывпа, пӗр канӑҫсӑр...
Те ирӗк ҫуккипе ҫилне шӑнараймасӑр.
Ђашлаӑҫке кунҫӗрӗн ҫав тинӗс хумсемпе?
Ҫийес пекех, тулашнине пытараймасӑр,
Пӑхаӑ вӑл ман ҫине пин куҫ шуррисемпе.
Хура сӑкман пекех выртаӑ вӑл хумханса,
Ун ирӗк ҫук — мухтанӗђђӗ вӑйпе!
Авалхи пек тепре, ҫыранлӑ пулмасан,
Ҫӗр ђӑмӑрне вӑл кӳллентерӗђђӗ хӑйпе!
Упасем пек сикеҫҫӗ пӗр-пӗрин ҫинђен
Ҫиллес хумсем.... пӗрӗхтереҫҫӗ ҫӑмӑрпа....
Пӗр урнӑ хум, мана, ҫак ђул каска ҫинђен
Ҫапса ӳкерђӗ сӗрепсӗр ђӑмӑрпа...
Анђах.... танмар вӑйсем: ман шанӑҫ — ђул каска
Алли ун ҫитес ҫук — пит ҫӳлӗ тӳпесем!...
Хум хыҫҫӑн хум!...
Ман йенелле васка-васк
Ав умлӑ хыҫлӑ ӗрӗхеҫҫӗ-ха вӗсем!...

Кустарăрха мурсем... шансассăн вăй çине!
Ђылай хумсем кунта çӳререç йавăнса!..
Еп тăракан каскан ђул йанаххи çине
Пĕрерĕн, есĕр те тĕпренĕр, çапăнса!
Пĕр илнĕ ирĕке кам парĕ вăрçăсăр?
Еп ђул çинђи çуртран
хаљ, урăх анас çук!..
Есĕр пĕр-пĕринпе вăрçаттăр...
Вăрçăсăр!
Ман ирĕке çапах
никам та çăтас çук!..

## ПĂЛХАВ ЙУРРИ

Çамрăк поета

И долго буду я народу тем любезен
Что чувства новые в нем лирой пробуждал...
ПУШКИН

Тĕнђе ик йенлĕ — астăватпăр:
Пăлхав,
Çилтăвăл,
Кĕрешӳ,—
Ниçта ан пултăр килĕшӳ,
Шăпа çĕн çамрăкшăн тытатпăр!
Пăлхав кĕвви кивелмĕ ђас,
Пăлхав йурри пĕрмай йăхравлă
Йурла, поет, сассу йанравлă,
Ђĕру çĕн пурнăçшăн хавас.
Пăлхав хайар, пăлхав ђĕресĕр:
Ăна кирлех йун кӳнĕ ђӳк,
Ăна халран парне кӳмесĕр
Хисеп поетшăн пулас çук,

Хисеплĕ ĕçшĕн тар тăкатпăр,
Хисеп никамшăн йутă мар;
Хисеп — ҫеҫек, ĕçре тымар.
Хисеплĕ ĕçшĕн тавтăватпăр.
Кисревлĕ ĕçшĕн — вут ҫĕре —
Çĕн пурнăç сывлăмĕ — çĕн çăлтăр,
Ентĕркесси паҫах çухалтăр
Вутпа тасалнă тĕнҫере.
Ес те, поет, тар тăкăн, хашкăн,
Анҫах ҫуну ан тарăхтăр,
Хăмаç кĕпӳ ан сарăхтăр —
Пурне те çырнă тар тăкмашкăн.
Поетăн ĕçĕ йунлă тарлă
Ҫĕри йурлаӑ ун сăвăлла,
Çампа ун ĕçĕ пархатарлă,
Çампа йăхравлă пулмалла.

## „ÇĔНĔ ÇУЛ"

Ҫеркке пайан та ӳпленет тĕр
Ӳпленнĕ пурнăç мĕлкисен.
Саланнă ĕмĕтшĕн, пĕлетпĕр,
Вĕсем ĕçеççĕ тĕлкилсен.
Ан ҫар „Çĕн çулăн çĕн телейĕшĕн"
Курка çĕклетĕр кив тĕнҫе;
Епир Октăпĕр йупилейĕшĕн
Йалав çĕклер вăхăтĕнҫе.
Октăпĕр кунĕн ҫаплă йаҫĕ
Тĕнҫешĕн паллă пулнăран,
Етем ăна çĕн тивĕç паҫĕ, —
Çĕн çул пуçланҫĕ çак кунран.

Тăшман шутлаҫҫĕ ĕмĕр-ĕмĕр
Тăсмашкăн пусмăрлă ĕçне,
Пурăнатпăр,теҫҫĕ 20-ĕмĕр —
Ак тухрĕ пурнăçĕ вĕçне!
Вунçиҫ çултан мала каймашкăн
Ун „20-мĕш çĕрçуллăхне“
Пӳрмен истори. Тĕппулмашкăн
Вăл çырнă пусмăрăн йăхне.
Мулпуçĕ „20-мĕш çĕрçуллăх
Телейлĕ“, теҫҫĕ (хĕпĕрте!).
Леш кӳҫĕ пирĕншĕн хăйуллăх
Хăйне çĕнме окťапĕрте.
Çултан çулах аптранă мулăн
Кĕтме тивет усал хыпар,
Телей çăлкуçĕн çулăн
Сахал мĕн мулшăн пархатар.
Ҫураллăх тытăнса сахал тăрĕ
Икке пайланнă çĕр çинҫе,
Йаланлăхах ун пусмăр алтăрĕ
Ӳксе саланĕ пĕринҫе.
Ĕмĕрлĕхре, аван пĕлетпĕр,
Окťапĕр ĕçĕн вырăнне,
Пулас кунçулшăн вĕренетпĕр
Пур иртнĕ пурнăç сарăмне.
Асра пĕрмай çĕн вăхăт шуҫĕ:
Шутлатпăр „1-мĕш ĕмĕртен“—
12 çул 2 уйăх тулҫĕ
Шута тытсан Окťапĕртен

Ленинкрат
10/XI-29 ç.

---

3*

## СЫХЛĂХ CĂВВИСЕМ

### ХĔРЛĔ ÇАРА КАЙАС УМĔН

Топрисывнĕксен ђастушкисем

Аслă çула тухнă ђух
Шăпђăк сасси илтĕнђĕ;
Хĕрлĕ çара пухнă ђух
Ĕç çамрăкĕ илĕнђĕ.
    Шур ђăланта шур сехет —
    Çапма вăхăт çитрĕ пуљ;
    Хĕрлĕ çар пире кĕтет —
    Кайма ђерет çитрĕ пуљ.
Тулран тунă йăвађа
Тулли çăвар çимешкĕн:
Ӳссе çитрĕ йаш ађа,
Хĕрлĕ çара кĕмешкĕн.
    Сиксе вĕрет сăмавар
    Кăмрăксăр мар, кăмрăкпа;
    Çул çеммине йара пар,
    Çара кайас кăмăлпа.
Карăш куртăм картара —
Каркаланса вĕçетçке,
Ĕç патшалăхĕ тавра
Куллен тăшман çӳретçке.

Ђăпар куккук ђапсăр мар,
Пурте ăна итлетĕр,
Пирĕн тăшман сахал мар
Пурте ăна пĕлетпĕр.
Пусма вĕçне сарнă ђул,—
Çĕре тумла пăсасран;
Хĕрлĕ çарăн çын темђул—
Пухнă вăрçă тухасран.
Вăштăр-вăштăр çил вĕрет
Çил вĕрет те, тăвăл мар.
Çав тăшманшăн çил хĕрет
Çилли пур та, пуç сывмар.
Пĕрђĕн пĕрђĕн пĕрлĕхен
Пĕрђĕн тат та—çăвара.
Тар тăшманшăн ан хĕрхен—
Вырăн пурха çăвара.

## ТУЛЛИ ЫТАМ

(Топрисывнĕксен ђастушкисем).

Тулли ытам çĕн тăмра,
Йала кайаť хурăç сас;
Çара кайас кун умра,
Хĕрлĕ çартан ма йулас?
Саттин саппун саплăк çеç,
Ĕçре йурĕ—çак та йар.
Çаршăн кирлĕ ђухăн çеç—
Ђухăнсемшĕн Хĕрлĕ çар.
Шур йур тăрăх тил йуртаť
Хăва тĕмми шыраса;
Пуйан йаш ђирпе вырťаť
Ĕç çарĕнђен пытанса.

Ăша кайман курака
Ăман çиме çуратнă;
Уссăр çамрăк кулака
Çар шăпинҫен хуратнă.
Çула тăрăх шут турăм
Сĕлĕ акма çурмалла;
22 çул пурăнтăм,
11 çулне тарçăлла.
Турта тулли тур лаша,
Турти тăрăх тар тăкать;
Çамрăк ҫухăн ҫăваша
Хут пĕлменни шар тăвать.
Çут тур лаша — çул çутти,
Симĕс пĕкĕ пĕлĕтне;
Ах, ҫун савни Ултутти!
Çара кайап пĕлетни?
Сар саппунăн сар çыххи,
Сарă пурçăн йарапи;
Çартан килсен, сар Сухви,
Сан мăшăру пулăпи?
Урлă кĕлет умĕнҫен
Ут уттартăм уйалла;
Атте анне килĕнҫен
Çара кайрăм хуралла.
Ула лаша утларăм
Улăх урлă уттарма;
Хĕрлĕ çарта шутларăм
Ут çарĕнҫе ҫуптарма.
Нăрттин-нăрттин кăвакал,
Çутă кӳлле йуратать;
Пирĕн çамрăк çавнашкал —
Хĕрлĕ çаршăн вăй хурать.

# Ӑсату сӑмахе

Хӗрлӗ ҫара кайакансене.

Калас сӑмах ларсан ҫухалҫӗ,
Мӗн калӑн Хӗрлӗ ҫар ҫинҫен.
Ҫунаҭ ӗҫ паттӑрӗ, хуралҫӑ
Сан сӑр шинелӗн айӗнҫе.
  Ӗмӗрлӗхре пурнаҭ йасалӑх—
  — Нимле ӗҫ те вӗҫхӗрсӗр мар—
  Лӑпках пайан утаҭҫке халӑх,
  Ыран тин ҫиҫӗ вуткӑвар.
Тавра тӗтреллӗ, вӗт, куратӑн,
Ҫунатланаҭ тӑшман куллен.
Ҫав май ес те хурҫӑланатӑн
Мӗлйунӑн канӑҫшӗн хуллен.
  Хаљхи истори ҝустӑрмишӗн
  Сукмак та шурлӑ, сакӑлта,
  Тӗнҫе кисренӗ ӗҫҫыннишӗн—
  Кисрев ҫӑлкуҫӗ ҫакӑнта.
Епӗр аҫаллӑ вуткӑваршӑн,
Анҫах ҫӗртместпӗр кӑварне
Ҫӗн сыхлӑх ҫапӗ Хӗрлӗ ҫаршӑн
Ҫапни кисреттӗр тӗнҫене.
  Тӑшман тӗллет, антив тӗллетӗр
  Ес те унтан инҫех ан кай,
  Ҫӗрӳ сан хушӑн ан сехретӗр,
  Хулна ан ус, пуҫна ан тай.
Октапӗр тӑвӑлӗн аҫишӗн
Пӗр ҫул, пӗр тӗл выртаҭ малта—
Сойусӑн ҫикӗсӗр тӗнҫишӗн
Вӑрҫаҭ вӑл ҫиҫӗмлӗ ҫарта.

# ХУРАЛÇĂ

Ман тăван çĕршывăн аслă ҫиккисем
Еп сыххипе тăшманшăн çитейми;
Ирĕк пек ытайми ун хирĕсем,
Ылттăн хĕвел пек ун вăйĕ, çĕнейми.
Хăйĕн канăçшĕн ĕççарĕ сехремест —
Вунă çул упраť ăна ун хуралçи!
Пилсĕр тăшмантан ман халăм шикленмест.
Вăхăтпах тулаť пур пилсĕрсен шалçи...
Ĕççынни пайан ĕçлетха канăçлă,
Килĕшӳ тĕрексĕр тăшманпа, пĕлетĕп.
Тĕрек çук килĕшӳре те, шанăçлă
Хамăн çĕршыва ӳтпе еп хӳтĕлетĕп.
Пурнăçа вăратнă тăрă ирхине,
Йе унăн уттине тӳнтернĕ каçпала,
Еп те тăшман çеç! Сăнатпăр пĕр пĕрне:
Хăшĕ вăй йенҫен ҫуптарнăши мала?
Епĕ хĕрнĕ вăрçăсен вуҫаххинҫе,
Туйнă тупă, сĕрĕм, хурăç тăрнана,
Караппа ҫĕвеннĕ тинĕссем çинҫе.
Вилĕм ташшипе кисретнĕ хăлхана.
Хамăн тăптăрă çĕршывăн сенкерне,
Улăп-савăта: кăварлă хурана,
Калҫасен тарпа хăпарнă минтерне
Пуç тӳнмесĕр еп картармăп хурана.
Сыхлăх ҫанĕпе, тăван çĕр ҫиккинҫе
Еп хуралçăра тăратăп пит ҫипер.
Пролеттари ҫĕнсен — ман алă хĕç çинҫе;
Авăрланнă ман пăшалăм — тыт та пер!

* * *

Умлă-хыçлăн йе вуниккĕн
Трук хусканђĕр пур Теникĕн,
Пур Йутенĕђ пур Колђак—
Пирĕн йурă пурпĕр çак:
    Таврара çанталăк—хăмăр,
    Ĕç тăшманĕ хурçă ђăмăр
    Ĕç тĕнђишĕн хатĕрлет.
    Хатĕрлетĕр—кам сехрет!
Тепĕр хут Колђак ĕређĕн
Хумĕ çапĕи Çĕпĕре?
Партисанлă çар отређĕн
Йађĕ хаљ те ђĕрере.
    Тен Путоннăй йĕррипех
    Тнеппăр урлă утлă çарăн
    Kaçмалла пулаť хастаррăн—
    Фронт татмашкăн тĕнђипех.
Вĕçрĕнменха Перекопăн
Вăрçă тĕслĕхе асран;
Ĕмĕр вăрăмха оккопăн—
Кам сыхланмĕ канасран.
    Килтĕр Вранкĕл, йе Петљўрă..
    Крым, Украйнă ирĕк йурă
    Хаљ вĕренђĕç йурлама.
    Кил Пилсутски ташлама!
Камшăн хаљ пуласлăх хупă?
Кирлĕ сыхлăх, кирлĕ тупă—
Пур тĕнђе те хуралра.
Пултăр помпă алăра!
    Сўннĕ мулăн вăй-хăваđĕ,
    Ĕç çĕнтерĕ. Ун ђухне
    Тупă, помпă, йе кранађĕ
    Ђăмĕç трактăр хуранне.

# ХУЛА САНĔ

## ЛЕНИНКРАТ

Çуртйĕрсĕр çил пĕр канăçсăр вĕçрен,
Хўтте курас шухăшпала пуљ, савăнса,
Вĕçхĕрсĕр шупăрпа пĕркеннĕ тинĕсрен
Шăвать хуланалла, çĕлен пек йавăнса.
Йура хăпарту пек пашкатрĕ çийĕнђен,
Нўрелнĕскер, сĕнксе кĕрет вăл Невана.
Курпун кĕперсен те ђукун шăммисенђен
Йĕрсе, куççуллисем татлаççĕ çырмана.
Асфаљтлă урамсем йухаççĕ ик йенне.
Сĕмкеленђĕ кун. Нўрелнĕ сывлăша
Кăвак çапать. Каркаланса хула çине
Хура сăкман килет — сисет kaçхи шăрша.
Ун айĕпе шур саплăксем таçта васкаççĕ!
Çав тĕпсĕр пĕлĕтре вĕсемшĕн çул йĕрри
Çуках: ав Атмирал йĕппи çинђе тăрнаççĕ
Иссакки хĕресне [9]) çакланнă хăшпĕри.
Майпен йулхав тĕтре сурпанĕсем шăваççĕ
Çĕр куçлă ђул çуртсен çĕлĕкĕсем çинђен.
Çĕн пурнăç ăстисем саманана пăхмаççĕ:
Çĕр кисренет пăхлавлă пурнăç ташшинђен.
Вĕçне çитет ĕç кунĕ, савăтсем улаççĕ,
Нумай кĕтеслĕ пурнăç шавĕ хушшинђе

Танкăртатат трамвай, автопуссем нăрлаççĕ,
Лаша таканĕсем ђанккаççĕ çул çинђе.
Ешеннĕ, сĕнкĕлтетекен ĕç халăхпех
Тулса йăшăлтатат ик хĕсĕк тăрттувар,
Вĕçхĕрсĕр уйарлат урам ик йеннипех
Ĕç хыççăнхи вăхăта çеç саланнă пысăк çар.
Кашни хай ĕçĕпе, анђах пĕр ĕç çинђех
Çĕн пурнăçшăн мĕлйунлă çар ĕçлет.
Çак аслă ĕç çинђи пин халăх сассинђе
Ман хамăн пурăнăç сасси те илтĕнет.

## ШЫВРИ ЛЕНИНКРАТ

Кĕрлĕ вăхăт иртиђђен,
Вунă çул кайа Йутениђĕ
Хĕрлĕ Питĕр ђĕринђен
Йун сăхас шутпа йўтенĕђђĕ.
Хĕрлĕ Питĕрĕн ђĕри —
Ĕç тĕнђин кранитлă шанăçĕ!
Пит ес тўсĕмлĕ, вĕри;
Çташи саншăн пурнăç канăçĕ!
Пилĕк çул кайа пăхсан
Пур хула шывпа хупланнăђђĕ,
Хĕрлĕ Питĕр антăхсан
Ĕç тĕнђи ђунтан хурланнăђђĕ,
Вун Йутениђ тапăнсан —
Пит сехремĕ хĕрлĕ Питĕрĕ.—
Тинĕс çарĕ хăпăнсан —
Вăл тăшманшăн алăк питĕрĕ.
Хĕрлĕ Питĕрĕн çапах
Пурçке канăççăр тăшманĕ те —
Шыв тулни — ăна пађах

Çул ђăрсан хула лăпланĕђђĕ.
Шывшăн ним те кăлтăк мар
Пĕр çĕрех тăрса вăл кӳлĕнмĕ;
Çта йухасшăн — тĕллĕ мар —
Ун пуххишĕн çул ђас пӳлĕнмĕ.

*
* *

Норвеки çырĕ — ђул каска,
Унтан килет васка-васка
Тсиклон [10]) пĕр сыпăран вĕрсе,
Пит хĕрсе.
Хусканђĕ Палтти тĕпĕнђен,
Тсиклон шăваť ун çийĕнђен...
Çил хыççăн çил, хум хыççăн хум.
Вăйлă штурм.
Тсиклон выђарĕ иртĕнсех:
Пайан ђӳхенђĕ иртенпех
Неван кранитлă кункăри —
Куртăри!
Нева шур кăпăк пулиђђен
Кĕрешрĕ кăнтăр тулиђђен
Тулашнă тинĕс хумĕпе —
Вăйĕпе.
Пăтранђĕ сывлăш çĕр çинђе:
Тĕрек те çук çын уринђе.
Çилтăвăл — улăп утланаť,
Хутлатаť.
Нева тулаť.
— Йулташ, кала:
Шывпа кӳлленмĕши хула!
Ма çурђĕ тупă сывлăша!

Мĕн нуша!?
Ђеретлĕн, ђĕрĕк сехетрен,
Хураллă тупă крепăçран
Хула çинђе кĕмсĕртетет,
Сехретет!
Те каç, те кăнтăр — кам ăнлаŏ...
Нева хурлађĕ; хăмăрлаŏ...
Кун тĕсĕ çук хаљ пĕлĕтре,
Пĕлетре?
Нева тулаŏ... ђакаŏ... тулаŏ;
Çыран хĕрне çилпе туллаŏ.
Пур ĕççынни те хулара.
Хуралра...
Пушар отређĕ, Хĕрлĕ çар
Студенђĕ, комсомол пăр-пар!
Саланђĕç тĕрлĕ путвала
Хуралла...
Ђикке тин çитнĕђђĕ Нева...
Пĕр-рех! çил уртăнђĕ шыва —
Хум кусрĕ хулăм сарăмпа
Урампа...
Хум хыççăн хум... Хула шывра?..
Етем кашлаŏ йĕри-тавра...
Шыва ђарма ун вăй çитмест,
Кĕрешмест.
Шыв — ирĕкленнĕ таркăнах,
Ес ирĕк парăн, вăл хăнах
Персе антарĕ çĕр çинђен,
Тĕл килсен.
Шыва çăтаççĕ путвалсем.
Ниçта йулмарĕç хăвăлсем;
Куçаŏ Нева касран каса,

Хашкаса.
Трампарк йенне ђаваť трамвай,
Ђупаť автопăс [11]) караш май,
Ленкаççĕ хыççемпе пĕр-ик
Крусовик.
Сӳнет лектритсĕ; шыв пăрки
Тапаť сехревлĕ; ĕç йĕрки
Пайан пăтранђĕ тĕпĕнђен,
Пур йенђен...
Ӳркевлĕ çур çĕр çитеспе
Тсиклон тин урăх кĕтеспе
Хăйаккăн пăрăнђĕ аран
Неваран.

Октапĕрĕн 15-мĕшĕ, 1929 ç.
Ленинкрат.

## ИРХИ НЕВА

Ак ман умра кранитлă çыранпа
Шăваť харсăр, ађашшăн тăр Нева.
Унтан-кунтан пиçиккиленĕ ђукунпа
Ун пилĕкне. Пит ђаплăçке ку шыв!
Пĕлĕт çине тăрăннă трупасем
Ун йенелле сывлаççĕ хăрăмпа,
Çиллес Неван ђашлаççĕ хумĕсем,
Тĕнђе çине пăхаççĕ шур куçпа.
Кайа йулса, каç тунă кĕтесре,
Кранитлă вулашканăн хӳттинђе—
Шыв кăкăрне утланнă шур тĕтре
Шурăм пуçпа вăрçаť ир тулиђђен.
Хĕвĕл мĕлки ылтăнлă кăтрипе
Шыва ђăмсан—Нева илемленет;

Веç, пĕлĕт те вĕç-хĕрсĕр сенкерпе
Нева шывне мађђа пек хӳтĕлет.
Хула аваллăхне çыраннă пахђасем
Ђул çырана тĕрлеççĕ симĕспе,
Кранит çине тайаннă хăвасем
Выђаççĕ урса кайнă хумсемпе.

## АЕРОТЕХНĔККĂ

(Шухăш сыпăкĕсем)

Тĕпсĕр пĕлĕтĕн ђаршавĕ
Пурнăçпа куллен тулаť:
Сывлăшра проппелĕр шавĕ,
Сывлăшра карап йухаť.
Камшăнне моттор пĕлмесĕр
Тек тапаť, моттор вĕри.
Çак ĕнтĕ — пĕлетри есĕр —
Хурçă кайăкăн ђĕри.
Хурçă кайăк çул шыраť,
Йарăнайса вăл пыраť.
Çĕр çине ун кассăн-кассăн
Тăкăнаť йурри хавассăн,
Хурçă кайăк çулсăр мар,
Уншăн çут тĕнђе мађђасăр,
Çĕр урай çине пусмасăр —
Çулсăр-йĕрсĕр йарапар!
Шыв йуххишĕн-йĕлтĕр хатĕр,
Çĕр урайшĕн — кустăрма.
Унпала, пĕлсен калатăр,
Кам пултарĕ тупăшма.
„Все дороги в Рим [12]) ведут“
Теђђĕç ĕлĕк. Еп каласшăн:

Ку халап хаљхишĕн йут,
Вăл фашшисшăн [13]) ђăн пуласшăн.
Ĕççынни Римра хусканĕ,
Тен вара фашшис ăнланĕ:
Пур çулсем те малалла
Туртăнаç Мускавалла.
Сывлăшра проппелĕр шавĕ—
Ескатрилйĕ [14]) сывлăшра:
Тĕпсĕр пĕлĕтĕн ђаршавĕ
Пăнђăн-пăнђăн хупхура.
Пурнăç куçнă пĕлĕте;
Ĕç тĕнђи вăрçаћ комуншăн.
Ĕç тĕнђи йухтарнă йуншăн
Курĕ тулнă ĕмĕте.
Еп илтетĕп: сăвăçсем
Çăлтăра савса йурлаççĕ,
Вăл инçишĕн хурланаççĕ;
Пит те ђăрсăр ĕмĕтсем!
Ĕç çитмен ха ĕмĕрне:
Çĕн етемлĕх ђăмăрне
Çĕрĕн ђăмăрĕ лекмесĕр
Уйăха ăмсантăр есĕр.
Сăввăрта йурлан хĕвелĕр
Çитейми тетри? Калап:
Тăвĕç ратио-проппелĕр
Пулĕ ратио-карап.
Ирĕкленнĕ ĕç çĕнтерĕ,
Çитĕ тăрĕ самана:
Çут хĕвел патне вĕçтерĕ.
Çĕн етемлĕх хăнана.

Кели.

# ÇĔНЕЛЕКЕН ИАЛ

## ÇĔНЕЛНĔ ÇĔР

Йунпа ҫӳкеннĕ çĕр ҫĕри,
Тăван ана тарпа шĕвелнĕ...
Уйхирĕн ҫăтăмлă тирри
Пăлхавăн вуҫĕпе çĕнелнĕ.
  Çум пусмĕ çуннă çĕр питне,
  Пукра тырра хаљ çĕнтерейме;
  Çĕр мулĕ сăхĕ ĕмĕтне,
  Пире
  Хаљ урăх çитерейме.
Муççей кĕтет суха пуçне,
Хуллен хире çĕн тĕс витерĕ:
Ҫăвашăн выçă уйхирне
Ыран „Фортсон“ пĕтĕлентерĕ.
  Тӳремлĕ хирĕн талкĕшпе
  Çунатлă шнейккă хăлаçланĕ,
  Çапла кăкланĕ тĕппипе
  Ҫуралла
  Пурнăçăн ылханĕ...
Çĕн тыршăн кивĕ тыр паçми —
Тырпул туппи куллен ӳсесшĕн;

Выртат̆ ђураллăхăн хысми —
Тамка — аваллăхшăн çӳресшĕн.
Колхосшăн кивĕ тамкасем,
Патаман та ансăр тыр туппишĕн —
Вăрçаççĕ тырă ăстисем
Ертеллĕ
Пурнăçăн йуппишĕн.
Турра ан шан, хастар муђей,—
Хăвна хăвах ес пулăшăн,
Пӳрейме „пӳлĕхçĕ“ телей
Сан ĕмĕтри тырпулăшăн.
Нăхта вакланнă саншăн та,
Çĕрне хаљ илтĕн — тек ан пар;
Ванса выртаççĕ хыçăнта
Помещђĕк,
Турă пихампар...

## ВАТĂ ТИМĔРÇ

Ђанк, ђанк! — Куллен кунах ман тăм лаçра
Пĕр тимĕр йурри çеç ђăнкăртатат̆;
Ун кĕввипе танах пĕр самантра,
Ђĕрем те килĕшӳллĕ картлатат̆.
Пăф, пăф! — Тăрна сăмсиллĕ вĕркĕђ пур —
Пашкат̆, сывлат̆ вăл картлă хырăмпа.
Ан вĕрха, тусăм — тимĕр хĕрђĕ пуљ,
Пĕр хĕрнĕ ђух шаккам пур вăйăмпа.
Шанк, шанк! Шанк, шанк! Кун хыççăн кун...
Кăварлă хал сӳнет пуљ çак лаçрах.
Кĕлленђĕ сарă çӳç, кивелђĕ йун,
Хуçланђĕ манăн пĕв çамрăкранпах.

Йунашарах ҫӗр тимрӗҫ ертеленнӗ:
Вуник станук, мотторӗ улăп пек.
Ҫӗр ҫын хуҫа — пӗр пек ӗҫе пикеннӗ —
Кунта ӗнтӗ ӗҫхакăлӗ, тӗрек.
Ҫак пурнăҫа курасҗӗ вилиҗҗен,
Ман пурнăҫăм кив вӗркӗҗпех вӗркерӗ.
Пурнас кунҫул кăварӗ сӳниҗҗен
Атте мана ик җăмăр пехиллерӗ.
Пӗр җăмăра еп тытрăм мăлатук.
Шаккап унпа хам пурнăҫ тимӗрне;
Шанк-шанк!... тем усăнҗӗ ман алă трук,
Нушаллă пурнăҫ хуҫрӗ ӗмӗрне...
Вилме тивет ертеллӗ кун курмасăр,
Кайса выртап вилнисемпе вӗҫе.
Ман ывăлăм пӗрлештӗр. Еп канмасăр
Мухтав йурри йурлатăп ҫӗн ӗҫе.
Кил, ывăлăм. Ак тыт ман җăмăртан
Нуша пуҫне салатнă млатука.
Алран ан йар. Хисеплӗн җăмăрта.
Ӗҫ хӗрнӗ җух шакка...
шакка...
шакка...

## СУЙЛАВ ҖАСТУШКИСЕМ

Вӗтӗ хăва ҫаппине
Шăппăршăнах пухрăмăр:
Пайан халăх пуххине
Суйлав тума тухрăмăр.
Шурлăх тăрăх шурă йур
Ҫур кӳнӗнҗен иртеймӗ;
Йалсоветра кулак пур —
Ҫак суйлавра кӗреймӗ.

Шурхăвaçăм шупкалаť —
Кĕр тултарҫĕ, хĕл килет;
Йал кулакĕ ҫупкалаť,
Çĕн суйлав ҫух хĕн кĕтет.
Пуçлă вĕçлĕ анана
Вырма аван тейеççĕ;
Пирĕн йалта пуйана
Суйлавсене кĕртмеççĕ.
Çӳлту çинҫе çил арманĕ
Йалан çилсĕр авăраť;
Куштансене йал пуйанĕ
Хăйне майлă çавăраť.
Йăрар шывĕ тарăн мар,
Ҫи тарăнни пилĕкрен;
Пуп каварĕ йышлă мар,
Иртеймерĕ пиллĕкрен.
Ҫăпар саппун çакайрăм —
Сăн кайасран хăрамăп;
Йалта суйлав тусассăн
Ҫлена кĕҫĕ хĕрарăм...

## ЙАЛКОРА

(Ăсату сăмахĕ)

Шупашкара·инçе çула,
Çултан-çулах пĕрре килсе,
Канашлăвра çĕн ăс илсе,
Каллах кайан ес йалалла.
Кутамкуна хулпуççине
Хурса çуран утатăн ес,
Ҫасрах йала... йала çитес,
Шухăш выртаť сан пуç çине.

Ҭункак, тусан ҫулупала
Пыратӑн ес... иртнӗ ӗҫсем
Сан шухӑшра... вӗсем сана
Вӑйпа туртаҫҫӗ малалла.

Ак ес йалта... Ҫитнӗ ҫитмен
Ҫирӗпленнӗ ӗҫ халӗпе,
Йалта татах ес кунӗпе
„Канаш“ ҫапне тӗреклетен.

Тӑван ҫӗлхеллӗ хаҫата
Тӑван ӗҫхалӑх хушшинҫе
Сарас тесе ес йалсенҫе
Ӗҫлетӗн пуринҫен малта.

Вӑл ӗҫ урлӑ, ес хаҫ майпен
Канаш хуҫайствӑн пурнӑҫне
„Ҫӗн йалӑн“ ҫаплӑ никӗсне
Куллен-кунах тӗреклетен.

Хаҫхи пек ес малашне те
Канашӑн хӗрнӗ ӗҫсене
Кӑлтӑклакан тӑшмансене
Перапа тирӗн пурне те.

Ес пӗҫҫен мар; йӗри тавра
Санпа сойуслӑ ҫухӑнсем,
Комунис партийӗ. Вӗсем,
Сана пулӑшаҫ хӗн кунра.

Пӗр шикленмесӗр малалла
Утах, йалкор Канаш куҫӗ,
Ирсӗр ӗҫҫен ирсӗр пуҫӗ
Санран йулаҭ тайла-тайла.

Санран кайран ак тӗнҫипе
Йалсем ҫӗнелӗҫ, вара тин
Ес ҫӗнӗ йал никӗсӗнҫи.
Ҭӗп ҫулӗ пулӑн ӗҫӳпе.

## ЂУХĂН ХЁР ШУХĂШĔ

Сар сак çинђе сар хĕр ларать,
Тĕр ĕçĕ унăн умĕнђе.
Вăл пĕр хускавсăр тĕр тăвать,
Ташлать çăмхи ун ђĕр çинђе.
Шăши куç пек кантăк çутти
Мађђа çинђе хумханкалать;
Хура пӳртри тискер хӳтти
Сар хĕр пуçне йăвăрлатать;
Ним пурнăç çук — пĕр çурт анђах,
Йăмра айне пытаннăскер,
Çук пурнăçран вăтаннă пек,
Çĕре пăхать такçантанпах.
Шухăш нумай: çамрăк пуçпа
Мĕнле пурнасши малалла?
Тĕттĕмлĕхре, çук пурнăçпа
Мĕнле тăсас пурнас çула?
Ун тантăшсем кађђа кайса
Сунтăх пекех, килте çуртра
Пурнаççĕ ав. Кун пек шăпа
Çук çын хĕрне тивмест ђасах.
Тивмин! Йалти тĕттĕмлĕхри
Пурнăç туллăхĕ мĕн ăна?
Савăк пурнăç — кĕнекери
Ăслăллăха пĕлсен кăна!
Йамăт тулăх... курпун суха...
Тĕттĕмлĕх — вилĕмпе танах!
Хуçайствăри вăйсăрлăха
Унпа тӳрлетеймĕн ђасах.
Кĕр кунĕ килет сив кунсемпе!
Ђухăн хĕр вутлă ђĕрине

Вăл мăк çуртран ђĕнет хăйпе
Ăслăлăхăн ђаплă ђатăрне!
Унта çамрăк хĕн курнă пуç
Ђаплана тăнлăх тĕррипе,
Хура пӳртре тĕтреннĕ куç
Пурне те курĕ — ђăннипе,

**Кели**

## УТÇИ КĔВВИСЕМ

(Çамрăксен ђастушкисем)

Тăр пĕлĕтре тăрисем;
Улăх-йешĕл, кун-йапшар,
Выђăр, кулăр, ађасем —
Пурнăç симĕс, ђун хастар.

Сар кайăкăн савнасси
Çаран утти çулиђђен;
Пирĕн вăйă выђасси
Çамрăк ĕмĕр иртиђђен.

Улăх тăрăх çултăм ут —
Пĕр тумхах çине тепри;
Çамрăк пурнăç шыв та вут:
Пурнăç сивĕ, хаљ вĕри.

Ăш кун, симĕс улăхра
Ĕç хресђенĕ талкăшаť.
Праçнĕк кунĕ клуп тавра
Хĕрлĕ калстăк йалкăшаť.

Йешĕл улăх талкăшпех
Çава сасси йанăраť;
Кашни çамрăк тантăшпе
Вăй калаť йур йурлаť.

Ирпе уйа тухсассăн
Тăрри сасси йанăрат̆.
Епĕр вăййа тухсассăн
Пур йала илем кайат̆.

Епĕр тарлă ĕç çинђен
Çĕнĕ кĕвĕ калатпăр:
Çамрăксенĕн йурринђе
Çĕн пурнăçа ырлатпăр.

Пурçăн курăк хумханат̆,
Тĕпсĕр пĕлĕт кăн кăвак,
Улăх тăрăх йаш пырат̆,—
Вăл-те ђухăн, те кулак.

Пултăр ђухăн ђухăнпа,
Тултăр пурлăх пурлăхпа,
Кам ес, çамрăк?—кĕретне
Пирĕн вăйă ĕретне.

Ђĕкеç ђĕппи ушкăнђе
Çăхан ђĕппи килĕшмест;
Пирĕн вăйă хушшиђе
Кулак ађин май килмест.

Çеçен хирĕн варринђе
Пине çитнĕ ват йуман.
Пин кил ђухăн хушшинђе
Пĕр çĕрми усал пуйан.

Пули-пулми курăка
Çулаççĕ те ывтаççĕ.
Парăнусăр кулака
Тытаççĕ те хупаççĕ.

Сывлăм çапнă улăха
Çут çава хирсе т̆ăкат̆;

Йантă тупнă пурлăха
Револ̌утси тĕп тăваť

Тулли ђĕрес тул ђусти
Тулса çитсе йухасшăн,
Пуйан хĕрĕ-йакăлти —
Пуйан кађђа тухасшăн.

Çаран тулли сар ђеђек —
Çилпе шăппăн кулаççĕ,
Клупра çамрăк çавăн пек,
Пурте лăпкăн вулаççĕ.

Уйа тухрăм — куртăм уй —
Çĕн тыр кайнă çӳлелле.
Клупа кĕтĕм — куртăм туй —
Мăшăр тунă çĕнĕлле.

Ман шур тутăр пит нумай —
Хĕрлĕ тутăр пĕрре çеç,
Манăн савни пит самай —
Йал хушшинђе пĕрре çеç.

Хумпа хăмăш пĕр тăван —
Кунĕн çĕрĕн пуплеççĕ,
Мăшăрланнă ик айван —
Хăйсемшĕн çеç ĕçлеççĕ.

Мана, савни, савсассăн
Ман кăмăлпа пурнăттăн;
Кив пурнăçа прахсассăн,
Çĕн пурнăçа курăттăн.

Атте лаши-тур лаша,
Çул çук çĕре çул турĕ.
Ларђĕ пупăн çурт çĕрне
Копператси кантурĕ.

# КĔРХИ КĔВĔСЕМ.

Хăнҫăр куҫлă хĕвел
Ҫул шыраŤ пĕлĕтре:
Те аташнă ҫултан, те аманнă,
Ун тавра кунĕпе
ТалкăшаŤ шур тĕтре,
Ун тавра пĕлĕтсем сапаланнă.
Ӳпĕнтернĕ хуран —
Тĕпсĕр пĕлĕт сенкер,
КасăлаŤ пĕлĕтпе саплăкшарăн.
Кассăн-кассăн улаŤ
Каскăн ҫил пит тискер,
Кассăн вăл калаҫаŤ пит йапшарăн.
Кун ҫăмхи пек кусаŤ;
Ҫуллахи кун тĕнҫи
Иртрĕ пуљ — шăмшак та ҫăмăлланҫĕ.
Кĕҫĕ кĕр хапхана.
Йанкăр йал укăљҫи —
Ҫак кунра ĕҫ купи ăнсăрланҫĕ.
Хир-вăрман тăрри
Кĕр шăваŤ йăпшăнса,
Кĕр тăкаŤ ҫăмăрне — план тумасăр,
Сив алли кармашаŤ
Пур ҫĕре савăнса,
Вăл иртмест ҫĕр тумне ҫаратмасăр.
Ҫӳреҫе умĕнҫи
Шурхăва шӳлкеми
ШупкалаŤ кунтан кун — сараласшăн.
Пыљҫăка ҫăпатам
Хаљ ĕҫет тӳпейми —
Хăй пас сукмака такăрласшăн.

Ансăрланђĕç кунсем;
Çĕрĕ анлă, шалпар—
Кăнтăрхи ĕçсене вăл ăмсанђĕ.
Кĕђĕ кĕр алăка:
—Кĕр, хăнам,—алă пар,—
Ĕç хресђенĕ пăртак хаљ пушанђĕ;
Вăхăт çитрĕ ăна
Клуп тавра талкăшма,
Ĕç ертелĕ çинђен шугламашкăн,
Вăхăт çитрĕ ăна
Хаçатпа туслашма.
Çитес çул тупăшне планламашкăн.

---

## ПОЕТСЕНЕ

### ÇĔНĔ КĔВĔШĔН

Кив пурнăçăн алланҫăкĕ—
Мешҫен çĕклет пуçа.
Пĕҫҫен сăвăç—ун анҫăкĕ
Çиçтерĕши куçа?
    Йурлаť văл тăлăх уйăхшăн,
    Шутлаť çăлтăрсене,
    Йĕрет пĕҫҫенлĕ хуйхăшăн,
    Шыраť ўт канлĕхне.
Ўт канлĕхĕ, ĕç тутлăхĕ
Мĕйлйуншăн йутах мар:
Ертел картишĕн хутлăхĕ
Çараха, тултарар.
    Урхамах пек лаши пĕрин,
    Теприн пур—йанавар,
    Ҫухăнсене апла пулин
    Ерттелĕн трактăрлар.
Çўле çут уйах çакнăшăн
Ним трактăр хутшăнмаст.
Çĕркаç пин çăлтăр ҫакнăшăн
Хресҫен пит хуйхăрмаст.

Мешђен хăйне йурлаť çăмăл
Çĕр çеммĕн тавлăкра;
Пĕђђен сынна савас кăмăл
Пиртен вĕт айакра.
Епир мĕлйун ĕç çарĕшĕн
Ĕнернĕ кĕслене,
Сӳнми пăлхав кăварĕшĕн
Хутатпăр ђĕрене.
Ӳсес пăлхавăн пĕвĕшĕн
Аватпăр вĕт хула.
Пайан кисревлĕ кĕвĕшĕн—
Ерттеллĕх, çĕн йăла.
Ĕç сăвăçĕ! Мăн хак тăрĕ
Сăвву сан — йанкăслан:
Вĕт саншăн ĕçĕн паттăрĕ
Шăпа тытаť пайан.

## ПРОЛЕТТАРИ МУСИНЕ.

Ех, штурăмларĕççке çитми тӳпесене
Кĕрхи аслатипе вăраннă мĕљйунсем.
Кепен [15]) çӳл сăрђĕсем шартлатрĕç ун ђухне,
Ӳпленђĕç курăнми çĕкленнĕ пĕлĕтсем.
Ман Мусă, [16]) ман савни, мана халђ кăмăлларĕ,
Йанра-ха, Мусă, çĕнĕ лирă [17]) кĕввипе.
Çав авăк самантра сана тирпей пулмарĕ—
Тустарђĕс тăвăлсем пур аскăн йăвине.
Йупа тăвăлĕпе сан çӳлĕ хӳттӳсен
Йаланлăхах вĕт сĕвĕнђе пархăтлă йупăнђи. [18])
Сан акăш-макăшу пăтранђĕ тĕпĕнђен—
Мĕљйуншăн уçăлђĕ Парнасăн [19]) укăљђи.

Хыткан ђăтăрсемпе Парнасăн тӳпинђен
Персе антартăмăр сана пăлхавлă тӳртĕме
Сан авмака пĕвне каскаллă пулиђђен
Çăпатапа таптарăмăр çĕн алттаре кĕртме.
Ес тухрăн вут вартан, ĕçхалăхпе, çунса,
Çак çĕнĕ алттаре кĕрсе парне кӳмешкĕн.
Кӳр. Сан турру — мĕљйун. Çĕнĕлĕхе савса
Хаљ ĕнтĕ тарават ăна ес ђӳклемешкĕн.
Ку алттарте каçар, ыршăршлă миррă [20]) çук,
Ĕсĕртекен фимиампа [21]) тулаймĕç мађђусем;
Кунта ĕç туррине кӳреççĕ тарлă ђӳк.
Сан, Мусă, ĕçлĕхлĕ, хытшăнлă кађђусем.
Илтетни: савăтсен пин саслă труписем
Пĕр хурçăллă саспа кăвак ирпех улаççĕ.
Йупа аслатине çуратнă ађасем
Ĕç турриве унта мухтав йурри йурлаççĕ.
Ак лирă — хур курман — ĕлĕкхи пек йанравлă
Çĕн кĕвĕпе ăна çĕнтернĕ пролеттар;
Вăл пирĕн алттарте ĕмĕрхи пек мухтавлă,
Итлет ăна мĕљйунлă ирĕкленнĕ çар.
Тек савăнмĕç ăна, мул тарçине кĕртсе,
Аваллăх мĕлкине пĕркеннĕ ĕмпӳсем [22]).
Тек пусмăр таншипе ĕçхалăхне йĕртсе
Çитет! çитет!.. çитет!!! ташлађђĕрха хăйсем.
Напатлă кĕслепе вăранђђĕр тертрисем,
Кĕрешђĕр ĕмĕрсен хура ылханĕпе;
Ĕççыннисен тăртаннă хăлхисем
Килленђĕр савăклă çĕн кимăн [23]) ђанĕпе.
Вĕркетĕр самана ђăн лирă сассипе...
Ђăвашăн варĕнђен Рапинтранат [24]) çуралĕ.
Митскевĕђ, Пушкĕнăн, Шевђђенккă кĕввипе
Ђăваш пур хĕнхура хурçă кăшăлпа ђуралĕ.

Ун йанкăс кĕслипе шанăр çитес куна,
Пулас „Йупасене" тĕлпулĕ хĕвелтухăç;
Ун кĕввисем вăратĕç çывракан йуна —
Пур тертĕн кĕтесне кăварлăн кĕрсе тухĕç.

## ПУШКИН ХУСАНКАЙПА КАЛАÇНИ.

Слух обо мне пройдет по всей Руси великой
И назовет меня всяк сущий в нем язык:
И гордый внук славян и ныне дикий
Тунгуз и друг степной калмык...

Пушкин

Каçар мана, мухтавлă Хусанкайăм,
(Йухат кусçулĕм пронсă куçсенђен):
Ман „Памĕтнĕк" çинђе тивмен те пайăм
Ђăваш çынне — пађ маннă ун çинђен.
Ик-виç тĕлте пĕр хаксăр, астăватăп,
Асилнĕђђĕ ăна еп хушăран,
Ес те ђăваш:
Хаљ тин ак паллашатăп;
Ăçтан пĕлен çынна хушаматран?
Ес — Хусанкай,
Еп — Пушкĕн хушаматлă;
Сан натсине кам пĕлнĕ, хăйамат?
Таçтан тухса ман пек ес пултăн йатлă,
„Етемлĕхшĕн" вĕт пурпĕр хушамат.
Мана пурте, астуха, вырăс теççĕ,
Ак тамаша! — Еп — некăр тĕпренех;
Ђăнах „отсталăй натси", вĕт — пĕлмеççĕ.
Хаљ кенисем тухаççĕ пиртенех.
Çитменнине ђăваш ак пулнă пулхăр —
Кули, поет, ес йĕмĕн асилсен?

Хисеп сана сахалшӑн ес ан тулхӑр —
Вĕт кенийе хакласҫĕ вӑл вилсен.
Ес ылтӑн Орта тетĕн — илткеленĕ,
Вӑл пулхӑр пулнӑ тетĕн — илтмен:
Еп ку ĕҫе сахал вĕренкеленĕ,
Ыйтас ӑна Миххал Петровĕђрен:
Пулсасӑн та —
Мĕн усӑ ђӑвашсемшĕн?
Орта укҫи кĕмен пуљ пӳтшета?
Кĕрсен... пӳтшет ырханҫке сирĕн темшĕн,
Сан урунта ав темшĕн ҫӑпата.
Тĕле пĕлсен ес урӑхла калаҫӑн:
Орта вӑл мĕн? —
Ӑна ес тек ан ђав.
Ҫав пулхӑршӑн вилниха Ҫтенккӑ Раҫӑн?
Ун ђапĕшĕн пуҫ хуђи Пукађав?
Теприн, ђӑнах та, пуҫĕ майсӑр аслӑ —
Лаххан пекех —
Ӑсĕ кĕҫĕн ҫерҫиннинђен.
Теприн пуҫ вӑхӑтлӑ, ҫӳҫсем лупаслӑ,
Анђах ун шухӑш пысӑк... хӑ...й ҫинђен
Тата калам: поемӑри керойшӑн,
Ман шухӑшпа, ђыс пысӑк вӑхӑтра:
Хаљхи ҫынсем ҫунаҫҫĕ хĕрлĕ туйшӑн,
Хаљхи „Онекĕнсем“ ĕҫлеҫҫĕ сӑвӑтра.
Нева умне тухаӗ пуљ кив Онекĕн,
Пуљварсенђе хаљ те пур Таӗйансем —
Поемӑра... тупаймӑн. Ку инкекĕн,
Сан хисеппе, ӑҫтаха сӑлтавсем?
Ес кӑлӑхах мана лӑплантарасшӑн —
Ҫыраӗ пролетписсаттĕл кĕђӳне,
Ĕҫ паттӑрне писсаттĕл сӑпатласшӑн —

Сетнер тĕлне тăратрĕ... кĕтӳçне
„Рапфак хĕрнеç“ хаљ çамрăк йуратасшăн;
Çĕрсе выртан кив пурнăç „Нарспине“
Ђул тупăкран ес, тусăм, вăратасшăн...
„Нарспи“ тĕлне ав тăнă „Марине“.
Онекĕншĕн хыпмаççĕ — ес куратăн,
Сетнершĕн хаљ йĕмеççĕ — ан кала.
Ес пĕђђенех вĕсемшĕн хурланатăн,
Пĕђђен пурнатăн иртнĕ кунпала.
Туел çуках.
Ман çуртăм — Твер пуљварĕ
Темпе шавлаť, анђах ку таранђђен
Туел çинђен илтмен еп. Калаçмарĕ
Пĕр кăмантир, поет та ун çинђен.
Хаљхи поет... туел çыйтмасť вилмешкĕн,
Илет те пăвăнаť — хăйне хăйех...
Ђăвашранах пример йураť илмешкĕн:
Ехмин,
Шенни,
йе Çеçпĕл Мишшинех...
Ђутах манман санран ыйтса пĕлмешкĕн —
Ес ма шеллен Сетнерĕн автăрне?
Йе Çеçпĕл Мишшине мĕн тивĕç
хĕрхенмешкĕн? —
Çуралнă икçĕр, — иккĕ ырăнне!
„Çавсем“ пулсан куљђанмăттăмăр епĕр,
Тесе манпа пуплеттĕн ес пĕркун.
Ма çук çынна шанасха тĕпĕр-тепĕр? —
Вĕркет санра йĕркесĕр çамрăк йун.
Ђĕррисеннех ĕç пит те пархатарлă:
Телей тупаť анаппĕст сăвăра,

(Вăл йампăпа пурнатхха пит те варлă)
Ман сăвăран ак иртĕç вăхăтра...
(Пĕр çын иртет... тăрамха калаçмасăр —
Тем калĕ, мур, илтсен ман сăмаха...)
Сывпул, поет!..
Çырни сайа каймасăр
Ус кӳтĕрӗӗĕ тар тăкнă халăха...

калаçнине итлесе тăраканĕ

Кели.

## УÇĂ ÇЫРУ

(Такмак выранне)

Хăшпĕр пойетсене савса
Саламалликкĕм, тавăссе!
Ман сăвва хапăл тăватра?
Виçешĕн шухăша хĕссе
Поемă-сăвă çыратра.
Ӗăваш çĕршывĕ ку йахăнта
Поет йенӗен пушах тăмарĕ;
Нимле поет та çакăнта
Хаклавсăр сăвă çыраймарĕ.
Пĕрин ăшӗикĕ пит аван,
Анӗах тулашĕ çыпăçусăр;
Теприн çушеӗĕ пит айван —
Ӗĕлхи пуклак та çаврăнусăр.
Пайтах поетăн çăлтăр анӗĕ:
Ăçта Çаваç, йе Йуманай?
Хĕвел çине тарса пытанӗĕ
Мешӗенĕн сăвăçĕ (Ă) Рсай.
Ма сас памас Митта Ваçлейĕ,
Татах выртмасти „Сĕрĕмре“?

Çаплаçке сӑвӑçӑн телейӗ:
Кас-кас аптрат вӑл, ҫӗмере!
Ҫӗкеç кӗсли те ансӑрланҫӗ —
Ӑçтан пурне те астӑван,
Миçен вӗсем? Ӑçта пытанҫӗç
Курак, Хутар, йе Ухливан?
Темме Лашман та сассӑрланҫӗ,
Пӗр „Йенҫӗк“ çырҫӗ те лӑпланҫӗ;
Сайраљҫӗ темшӗн Караттай —
Таканлӑ сӑвӑç, пуç ан тай.
Çунатлӑ сӑвӑç Тумиле
Паллах Йалавӗна шӑртланнӑ:
Парнас çинҫен анса киле
Поет çунатсӑр хӑлаçланнӑ.
Апла пулсан ак Хусанкайӑн
Тилли çине çиленмелле,
Тумилепе пӗрле, çул майӑн,
Ун та киле вӗçтермелле.
Апла хӑтланмӗ Хусанкай,
Вӑл лирӗкки хутне кӗрех.
Парнас çинҫен, поет, ан кай —
Ку таркӑн ӗçӗпе пӗрех.
„Хӗнхур“ айне кӗрсе пытанҫӗ
Пит пысӑк вӑхӑта Елкер;
Вӑл йӗрнине илтсе ӗнер
Ҫӑвашистат та ҫас вӑранҫӗ.
(Ӑ) Рсай йӗреҫҫӗ Тӑвӑлра...
Пӑлхав çынни (поет калатӑр)
Елеки йевӗрлӗ йурра
Октӑпӗр хыççӑн ма йурлатӑр?
Елеки йурӗха, тӗплентӗр,
Сонет ма тухрӗ кӑлӑха?

Хумма Çеменĕ, ес пĕлен тĕр.
Сонет çырсаттăн, калаха?
Салхуллă сăвă сайралаť,
Акиткă, схемă çук — куратпăр
Ђăваш ђĕлхи те хăйралаť —
Çĕнен етемлĕхшĕн йурлатпăр.
Вилет хаљ Ваçанкка çĕн йуршăн:
Тинамă-сăвă вырăнне
Çыраť вăл „отă“ Ахтур-туршăн,
Саваť „килмен Шупашкарне“.
Пĕлетĕр „Тĕшмĕш Униçешĕн“
Пĕр сăвă çырнăђђĕ Аттай...
Пайтах вуларăмăр. Ђĕрешĕн
Çыратăн çепĕçлĕ — каттай.
Поемă, лирĕкки, йе кулăшĕ —
Пурте пурнаççĕ вăхăтра,
Пайан пире хăш шанăр пулăшĕ —
Çав усă курĕ сăвăра.
Поемăсем çыраť Алакĕр.
Вăл „Хирĕçле хум“ çыриђђен
Ăна калаттăмăр: „Тăна кĕр,
Тăхта çырма вĕрениђђен“...
Йанкас, тен, пулĕ паллă сăвăç —
Сăнлаť вăл пурнăç таппине;
Çĕлешшĕнха ку çамрăк çĕвĕç
Йалпа хула кăвапине.
Ђĕре „пĕтермĕшĕ“ Тукташăм,
Йурлан пит витĕмлĕ савнишĕн.
Çĕн пурнăçĕн тĕлне, йулташăм,
Çапах ан ман ес хĕр ђĕришĕн.
Кĕсменсĕр суллăн тĕлĕ паллă;
Шыв тĕпĕ, пристăњсăр çыран.

Уссу пулаҭ: ђĕрӳ хавăллă,
Илемлĕ, витĕмлĕ çыран.
Çĕн çул çинђе санпа ĕретĕн
Утаççĕ Уйăп, Петокки...
Вĕсен шутне ес ху пĕлетĕн.
Еп асăнатăп пăртакиç.
Пурин те çулĕ сакăлта,
Анђах „Комунă“ ывăнтармĕ:
Çĕн пурнăç çулĕ çакăнта,
Ку çул пире хаљ такăнтармĕ.
Еп те ак сирĕнпе утатăп.
(Тĕле ђас марха çитмелли...)
Ćыв пулăр. Еп те сыв йулатăп.
Сире хисеплекен —
Кели

* *
*

Епĕр йал ӳпкинђе сывлăшпах ӳтлени
Пĕвсене çак таран карăнтарнă;
Кивлĕхе пĕтерес шанăçпа хӳтлени
Пăлханса тертсене парăнтарнă.
Тавтапуç пăлхава — пађĕ мел ђухăна
Нушана ерттелпе тăнламашкăн;
Йурлă çын пулнипе сĕнђĕ ирĕк ăна
Çĕнĕ пурнăç ђăнне тăнламашкăн.
Ђухăнсемшĕн хула ĕлĕк пулнă инçе,
Халĕ епĕр унта тăн илетпĕр,
Унăх хурçă хӳмеллĕ хайар ђĕринђе
Кивĕ пуçăн йунне çĕнететпĕр.
Ман ђĕрем йал çинђех, пуçăм çеç хулара —
Килĕ кун вĕсене пĕр пулмашкăн;
Çултан çул еп киле тавăрнап хăнаран
Ђухăнсен ăсĕпе сыхăнмашкăн...

Ик ђукун çивĕђпе пуйăс хыттăн пусса,
Уйсемпе, тусемпе таплтатрĕ;
Кантăк куçĕ — кино; теме те васкатса,
Ун тĕлне пулнипе куç ăсатрĕ...

Çĕр хăмланнă — кашлаť тин çуралнă тырпа;
Мамăк çўçлĕ ађи ун хăй ўссĕр;
Сулланаť хавшакпа — пĕтĕм йешĕл уйпа
Симĕс хум йăванаť пусрăнусăр.

Çил хăйаккăн йухаť тин вăраннă ирте;
Пĕлĕтсем хĕвеле ăмăрлаççĕ;
Икĕ улăп арман хăлаçланнă хирте,
Инçетрен такама хăмсараççĕ.
Ђăрсăр çул уйсемпе тек ђупаť хирĕлсе;
Ырнăçемĕн ўсет манăн халăм:
Ав кукша айлăмра сăртсемпе витĕнсе
Лапђăнаť çĕрелле манăн йалăм.

---

## ТЁРЛЁРЕН

### ПЕРВОЕ МАЯ

Мы — рабочие страдали,
Мы, тиранам всем на-зло,
Жизни трудной посвящали
Мая первое число.
С песней громкой и свободной
Царству гнета мы дадим
Знать, что мир толпы народной,
Мир труда неодалим!
Пусть тираны трудового
Угнетенного народа
В этот день узнают снова, —
В чем народная свобода.
Мы — рабочие всегда
В мае празднуем свободу.
Этот праздник в честь труда
Закаленного народа.

„Красный клич „№" 33 (369), г. Ядрин.

## ЗА НОВЫЙ БЫТ

(Женщине Востока).

Бежит самум пустыней мировой,
Крутя насильников мятежный караван,—
Великой силою — огнистой и стальной—
Спаялась беднота восточных стран.
Проходит бурей гнев; и вот уж явь — не сон:
Вздохнула женщина свободно на конец, —
Слетела с глаз чадра – открылся небосклон,
А с ним и солнца радужный венец.
Скользнуло с глаз глухое покрывало —
Ты новой мыслью осенилась вдруг:
Нет больше над тобой господского начала,
Распался рабства векового круг.
Проснулась ты, идешь за новый быт, —
Повязки нет — свободна даль тебе,
Лучами радости открытый взор блестит,—
Ты победила, ты сильна в борьбе.

„Трудовая газета“ гор. Алатырь.

## Р А П П Ă Р Т

(Интернатсионал веђђёрĕ ваљљи çырнă мелэтекламатси сăвви).

И мы чуваши-пролетарии
Отмщенья жаждою горя,
Как вы же бились
На баррикадах Октября.
С победой рабскою начертан
Финал наследью рабской тьмы;

Как вы же бьемся неустанно
Над стройкой ленинской и мы.
Тĕнҁипе ҫĕнен етемлĕх
Тытрĕ Ленин йалавне.
Ĕмĕтре пурнан илемлĕх
Вăй кӳртет ун ҁĕрине.
К десятилетью Чувашии
Колонны тракторов слагая,
Колхозами на половину
Об'ята масса трудовая.
Пархăтарлă ĕҫ курмасăр
Пирĕн касăлнă ҁĕре,
Хаљ ĕҫлер выҫăхтармасăр
Ĕмĕр выҫăхнă ҫĕре.
Мы фосфорит на свет выносим
В земных глубинах наших сложенный,
И дань трудящихся приносим
Земле веками обеспложенной.
Тĕнҁипе пулас комуншăн
Ним те шел-мар ҁухăна.
Авалтан вăл тăкнă уншăн
Тарлă хурлăхлă йуна.
Чувашин живший в горнемуки
О высшей школе не мечтал:
Мы горну высшему науки
Сегодня ставим пьедестал
Ĕҫҁăваш ҫĕршывĕнҁе
Тĕттĕмлĕх хуплантăр,
Аслă шкулăн лаҫҫинҁе
Ҁухăн ҫеҫ туптантăр.
Мы строим с темпом пролетарии
Фундамент мощный Цивильстрою,

И потечет по жилам медным
Огонь невидимой струею.
В начале новой пятилетки
Прорежут долы не спеша
Стальные кос две черных ленты
От Чебоксар до Канаша.
Епӗр хамӑр шыв ҫинҙех
Ҫиҫӗме тытатпӑр,
Кашни ҙухӑн ҫуртӗнҙех
Вутсӑр хӑй ҫутатпӑр.
Йал патне хула ҫывхарӗ—
Ҫӑмӑл пулӗ ҫӳреме;
Хӑҙ Мускав, хӑт Шупашкарӗ.
Ҫывӑх пулӗ пӗрлешме.
Уж и теперь на той дистанции
Равниной снежной на полях
Наш груз почтово-поссажирский
Проппелер движет на санях.
Ирӗкленнӗ ӗҫ ҫӗнтерӗ,
Ҫитӗ тӑрӗ самана—
Сар хӗвел патне вӗҫтерӗ
Ӗҫҙӑвашӗ хӑнана.
Для нужд грядущих техностроя
Для сцепки кирпича и стали
Мы воздвигаем комбинат
Древостроительной детали.
Ҫултан ҫул епир хыватпӑр
Хапрӑк-савӑт никӗсне,
Хурҫӑ ҙанӗ сапалатпӑр
Сассӑр ӗҫлӗ ҫӗр ҫине.
Побед одержанных не счесть,
Фронты труда у нас размерены;

Мы побеждаем там и здесь;
Мы в нашем творчестве уверены.
Пирĕн ĕçĕн сарăм аслă
Ђĕрĕре йухаť хĕлхем:
Пурнăç тăтăшшăн хаваслăх,
Пурнăç тăтăшшăн илем.

1930 çулђхи 15-мĕш апрел

## АСĂРХАТТАРНИСЕМ

1. Айтаса — ĕçе çăмăллатас тесе йурласа кăшкăрни.
2. Авăк — хăвăрт, сасартăк.
3. Йунлă вырсарни — „кровавое воскресенье“. 1905-мĕш çул йанварĕн 9-мĕшĕнђе Питĕрти рапођђисем патша патне çăмăллăх ыйтма кайсассăн, патша вĕсене персе вĕлерттернĕ.
4. Хорукнă — „шуђăллă турă, йалав турă, кĕреçе турă“, теççĕ ђăвашсем; иккун.
5. Каппон — рапођђисене „йунлă вырсарнийе“ йертсе кайнă пуп.
6. 6 Сехетте 50 минут — Ленин вилнĕ вăхăт (1924 çул, йанварĕн 21-мĕш кунĕ).
7. Кремĕл — Авалхи вырăс хулисен тăшман пырса кĕресрен хӳмеленĕ вырăнĕ (варри). Кели Мускаври кремĕл çинђен кунта калаť.
8. Мăнплан — Йевроппăри Алђпă тăвĕсен ђи çӳлĕ тăрри (Монплан).
9. Иссакки хĕресĕ — Питĕрти (Ленинкратри) иссакки сопорĕн хĕресĕ.
10. Тсиклон — Тинĕсрен тапхăрăн-тапхăрăн килекен пысăк çил.
11. Караш — автопуссем, автомопилсем усрамалли çурт.

12. Рим — Итталин тĕп хули. Пур çулта Рима пырса кĕрет, тени Рим патшалăхĕ вăйлă ђухне тухнă халап.

13. Фашшис — пуршуллă патшалăхсенђи капиталисла йĕркене сыхлакан реаксиллĕ орканисатсинђе тăракан.

14. Ескатрилйĕ — Йероплансен ушкăнĕ.

15. Кепе — Пур çветтитленĕ йапала, сăмах тĕпĕ „турă!“

16. Мусă — крексен ĕненĕвĕнђи поеçине упракан хĕрарăм турă (тĕрлĕ искусствăн, науккăсен те мусă пур пек ĕненнĕ).

17. Лиpă — кĕсле пек каламалли мусăк.

18. Йупăнђа — пĕркенђĕк.

19. Парнас — Крексен мусисем, ăсталăх туррисем пурнакан тў.

20. Миррă — Аравинђен кўрекен ыршăршлă сăмала.

21. Фимиам — Латăн шăрши.

22. Емпў — пысăк патша.

23. Кимăн — мухтав йурри.

24. Рапинтранат — Интуссен паллă писсаттĕлĕ. Вăл Совет сойусне килсе кайрĕ.

# ТУПМАЛЛИ


*Стр.*

Ретаксирен . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Васанкка Кели пурнăçĕнчен . . . . . . . . . . . . . . 5
В. Толкович — Кели революцилле Поет . . . . . . . . . 9
Октапĕр сăвăçĕсене . . . . . . . . . . . . . . . . . 18

РЕВОЛЮЦИ КĔВВИСЕМ

Революци карапĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . 20
Йунлă вырсарни . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 21
Октапĕр Питĕрте . . . . . . . . . . . . . . . . . . 23
Хĕвел . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 24
6 сехет те 50 минут . . . . . . . . . . . . . . . . 26
Мухтав йурри . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 27
Малаллăх кимĕнĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . 29
Комсомол маршĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 30
Тинĕс . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 32
Пăлхав йурри . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 33
„Çĕнĕ çул" . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 41

СЫХЛĂХ САВВИСЕМ

Хĕрлĕ çара кайас умĕн . . . . . . . . . . . . . . . 36
Тулли ытам . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 37
Асату сăмахĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 39
Хуралçă . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 40
Умлă-хыçлăн, йе вуниккĕн . . . . . . . . . . . . . . 40

ХУЛА САНĔ

Ленинкрат . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 42

Шыври Ленинкрат . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 43
Ирхи Нева . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 46
Аеротехнёккă . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 47

ÇĔНЕЛЕКЕН ЙАЛ

Çĕнелнĕ çĕр . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 49
Ватă тимĕрç . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 50
Суйлав ђастушкисем . . . . . . . . . . . . . . . . . 51
Йалкора . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 52
Ђухăн хĕр шухăшĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . 54
Утçи кĕввисем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 55
Кĕрхи кĕвĕсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 58

ПОЕТСЕНЕ

Çĕнĕ кĕвĕшĕн . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 60
Пролеттари мусине . . . . . . . . . . . . . . . . . . 61
Пушкин Хусанкайпа калаçни . . . . . . . . . . . . 63
Уçăçыру . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 66
Епĕр йал ӳпкинђи сывлăшпах ӳтлени . . . . . . . 69

ТĔРЛĔРЕН

Первое моя . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 71
За новый быт . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 72
Раппăрт . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Асăрхаттарнисем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 76

---

Чувашская
книжная палата
Чебоксары Чувашской АССР

Хакĕ 70 пус.
Цена 70 коп.

Х-3

К. КЕЛИ (Кузнецов)

# ОКТЯБРЬСКИЕ МОТИВЫ

На чувашском языке

Чебоксары ЧУВАШГОСИЗДАТ 1932